ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Июнь 19 ЭРНЕКУН
№ 118 (9027)
36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
РЕСПУБЛИКĂРИ ХУЛАСЕМПЕ РАЙОН ЦЕНТРĔСЕНЧЕ: Н. Филиппов. — Октябрь çĕнетнĕ ял (1 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: П. Щипцов. — Социализмла ăмăртăва ертсе пырасси пуçламăш парторганизацин ĕçĕ. М. Буркова.—Пĕр занятире (2 стр.):
Тырпул пухса кĕртмелли ĕç планĕ. Çĕрпÿ районĕнчи «Новая жизнь» колхозра (2 стр.).
ПАХА ÇУЛ-ЙĔРШĔН! С. Сергадеев.—Работниксен ответлăхне хăпартмалла (3 стр.).
К. Никольский.—Аслă гуманист (3 стр.).
М. Исаев.—Якимова письмоносец пек ĕçлемелле (3 стр.).
ЮРА ПРАÇНИКЕ: Г. Кузьмин.—Колхозлă ял ĕçченĕсен уявĕ (3 стр.).
Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем (4 стр.).
Америка авиацийĕ Корейăри водохранилищĕсем çине тапăнать (4 стр.).
Совет крейсерĕ «Свердлов» Англире пулнă май (4 стр.).

Парти пухăвĕ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ коммунизм обществи тăвас тĕлĕшпе совет халăхĕ умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ.

Çак задачăсене пурнăçлас ĕçре совет халăхне çул кăтартса тата ертсе пыракан вăй Коммунистсен партийĕ пулса тăрать.

Парти хăйĕн пĕтĕм ĕçĕнче пуçламăш организацисем çине таянса тăрать, мĕншĕн тесен вĕсем парти никĕсĕ пулса тăраççĕ. Парти пуçламăш организацисем урлă рабочисен, хресченсен тата совет интеллигенцийĕн анлă массисене партин ертсе пыракан органĕсемпе çыхăнтарса тăрать.

Пуçламăш парторганизаци партипе правительство решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн массăсем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçсем организацилет, парти членĕсемпе кандидачĕсене политикăлла воспитани парать, вĕсен политикăлла вĕренĕвне организацилет, вĕсем марксизм-ленинизм енĕпе пĕлÿсен минимумне вĕренсе пынине тĕрĕслесе тăрать, ĕçхалăхне халăх хуçалăх планне тултарма тата ирттерсе тултарма, ĕç дисциплинине çирĕплетме, социализмла ăмăртăва вăйлатма, ĕçри çитменлĕхсене, хуçасăрлăха пĕтерме мобилизацилет, ку тĕлĕшпе самокритикăна, уйрăмах аялтан килекен критикăна вăйлатса пырать.

Парти организацийĕ хăйĕн задачисене ăнăçлă пурнăçласа пырас ĕçре парти пухăвĕсем, вĕсене вăхăтра, тĕплĕн хатĕрленсе, идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çÿлĕ пусăмра ирттерни пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Хăй вăхăтĕнче В. И. Ленин парти членĕсен пултарулăхне ÿстерес ĕçре, ытти майсемпе пĕрлех, парти членĕсен пухăвĕсене час-часрах тата анлăн ирттерни пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартса панă.

Партин Пĕтĕм Россиăри IX-мĕш конференцийĕ парти членĕсен пухăвĕсене час-часрах ирттерме, пухусенче мĕнпур ответлă работниксем пулма кирлине кăтартса панă.

Парти пухăвĕсене вăхăтра ирттерни, пухусенче умра тăракан задачăсене тĕплĕн сÿтсе явни, вăл задачăсене пурнăçлама мĕнпур коммунистсене мобилизацилени—хамăр çĕршывра коммунизм тăвас тĕлĕшпе партипе правительство кăларса тăратнă историлле пысăк задачăсене ăнăçлă пурнăçлама май парать.

Çавăнпа та парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен пуçламăш парторганизацисенче парти пухăвĕсене вăхăтра, тĕплĕн хатĕрленсе ирттермелле тăвасси çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла.

Парти пухăвĕ вăл—парти организацийĕн аслă органĕ. Парти пухăвĕсенче çĕршыв умĕнче тăракан тĕп ыйтусене сÿтсе яваççĕ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Уставĕ тăрăх, парти пухăвĕсене уйăхра пĕр хутран кая мар ирттермелле.

Парти Уставĕ çакăн пек хушнине пурнăçласа, Чăваш парторганизацийĕнчи нумай пуçламăш парторганизацисем парти пухăвĕсене вăхăтра ирттереççĕ, пухусенче колхоз, предприяти, учреждени умĕнче тăракан политикăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчен пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтусене пăхса тухаççĕ, умра тăракан задачăсене пурнăçламалли майсене палăртса тивĕçлĕ решенисем йышăнаççĕ.

Парти организацийĕ тулли пурнăçпа пурăнакан, парти организацийĕ тĕрĕс ертсе пыракан промышленность предприятийĕсем, колхозсемпе МТС-сем производство планĕсене яланах пысăк пахалăхпа тултарса пыраççĕ, ĕçре çитĕнÿсем тăваççĕ.

Шупашкарти лентăсем тĕртекен завод производство планне уйăхран-уйăха ăнăçлă тултарса ĕçлет. Çак ĕçре пуçламăш парторганизаци хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăрать. Кăçалхи пилĕк уйăх хушшинче 10 пуху ирттернĕ, вĕсенчен виçĕшĕ хупă пухусем пулнă. Пухусенче пуçламăш организацире парти вĕренĕвĕ мĕнле пыни çинчен, профсоюз комитечĕн ĕçĕсем çинчен, цехсенчи парти ушкăнĕсен ĕçĕсем çинчен, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетесси çинчен тата ыттисем çинчен те сÿтсе явнă. Пухура пăхса тухма палăртнă ыйтусене тĕплĕн хатĕрлес ĕçе парти членĕсем активлă хутшăнаççĕ. Пухусем яланах лайăх ирттеççĕ. Коммунистсем парти организацийĕн ĕçне, администрацин хуçалăх ĕçне тĕрĕслесе тăрассине лайăхлатас тĕлĕшпе паха сĕнÿсем параççĕ.

Парти пухăвĕсене Канаш районĕнчи Доронин ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизацире те тĕплĕн хатĕрленсе вăхăтра ирттереççĕ. Пухусенче колхозпа парторганизаци умĕнче тĕп вырăнта тăракан ыйтусене сÿтсе яваççĕ. Коммунистсем пуçламăш парторганизацие колхоз пурнăçне активлă хутшăнаççĕ, парторганизаци хушнă ĕçсене тивĕçлипе пурнăçласа пыраççĕ, колхозниксем хушшинче политикăлла-массăлла ĕçе тимлĕн туса пыраççĕ. Колхоз кăçалхи çуракине ăнăçлă—вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттерчĕ. Хальхи вăхăтра тырпул пухса кĕртес тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем памалли плана срокчен тултармалла тума хатĕрленсе ĕçсем кунран-кун вăйланса пыраççĕ. Çакăн пек лайăх ĕçлекен организацисене тата та нумай илсе кăтартма пулать.

Çав вăхăтрах пирĕн организацире парти пухăвĕсене хакламан организацисем те сайра хутра кăна мар тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен, Йĕпреç районĕнчи «Красный партизан» колхозри, «Социализм» промартельти пуçламăш парторганизацисенче парти пухăвĕсем сайра-хутра кăна пулаççĕ, пухусен ĕçне коммунистсем тивĕçлипе хутшăнмаççĕ. Çавăн пекех Советски районĕнчи Мăн Чураш вăтам шкулĕнчи пуçламăш парторганизацире те кăçал 3 пуху кăна ирттернĕ. Çĕрпÿ районĕнчи пуçламăш парторганизацисенчен тăваттăмĕш пайĕнче парти пухăвĕсене ирттерес тĕлĕшпе Уставра кăтартса панă сроксене пăхăнмаççĕ. Райком секретарĕсем парти пухăвĕсенче сайра хутра кăна пулаççĕ, парторганизаци секретарĕсене парти пухăвĕсене ирттерме вĕрентмеççĕ.

Çаксем вĕсем уйрăм райкомсем парти пухăвĕсене вăхăтра ирттерме хакламанни çинчен калаççĕ.

Парти пухăвĕсен пĕлтерĕшĕ, чылай енчен, тĕплĕн хатĕрленнинчен, кун йĕркинче тăракан ыйтусене тĕрĕс палăртнинчен, пуху пуласси çинчен вăхăтра пĕлтернинчен, докладсен пахалăхĕнчен килет.

Массăсемпе çыхăну тытассине вăйлатас ĕçре усă пухусем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çавăнпа та усă пухусем ирттересси çине уйрăмах тимлĕн пăхмалла.

Уйрăм пуçламăш парторганизацисен ĕçĕнчен çакă курăнать: чылай чухне парти пухăвĕсенче пăхса тухма предприяти, колхоз, учреждени ĕçĕсемпе çыхăнса тăракан тĕп ыйтусене тăратмаççĕ. Уйрăм райкомсемпе хула комитечĕсем пуçламăш парторганизацисен кашни пухăвĕнче мĕнле ыйтусем сÿтсе явмалли çинчен кăтартса панипе парторганизацисен пуçарулăхне путараççĕ. Çавăн пек, тĕслĕхрен, Советски тата Элĕк районĕсенче парти пухăвĕсенче райкомсем кăтартса панă ыйтусене кăна сÿтсе яваççĕ.

И. В. Сталин: парти массисен активлăхне хăпартас тени вăл—вĕсем умне пурне те интереслентерекен ыйтусем кăларса тăратас тенине пĕлтерет, тесе пĕр хутчен çеç мар кăтартса панă. Пухусенче критикăпа самокритикăна вăйлатма кирлĕ майсем туса памалла. Коммунистсен пухусенче хăйсем пĕлсе тăракан çитменлĕхсене никамран хăраса тăмасăр хăюллăн критиклемелле, мĕншĕн тесен, самокритикăпа аялтан килекен критика—хамăр ĕçри çитменлĕхсене пĕтермелли чи хăватлă хĕçпăшал пулса тăрать. Çав вăхăтрах руководительсен масса мĕн каланине тимлĕн итлемелле, масса кăтартса паракан çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерме тăрăшмалла.

Çавăн пек пулсан кăна парти пухăвĕ коммунистсене политикăлла воспитани памалли чăн-чăн шкул пулса тăма пултарать.

Литвари Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ

ВИЛЬНЮС, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Литвари Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн черетлĕ пленумĕ пулса иртнĕ. Пленум Литва ССР-ĕнчи политикăллă ĕçри тата хуçалăхпа культура строительствине ертсе пырас ĕçри пысăк çитменлĕхсем çинчен сÿтсе явнă. Пленум Литвари Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Литва ССР Министрĕсен Совечĕн ĕçĕнчи пысăк йăнăшсемпе çитменлĕхсене, чи малтан, пирĕн партин ленинла-сталинла наци политикине пăснине палăртнă. Литва халăхĕ хушшинчен парти, совет, хуçалăх ĕçĕнче ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме кадрсем çитĕнтерес тата ĕçе уйăрса лартас тĕлĕшпе начар ĕçленине палăртнă. Партипе совет органĕсем, политикăлла-массăлла ĕçе вăйлатса пырас вырăнне, административла меслетсемпе анлăн усă курнине пленум сивленĕ. Пленум çавăн пекех колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетес ĕçре пулнă çитменлĕхсемпе йăнăшсене палăртнă.

Пленум çак йăнăшсене татăклăн тÿрлетме кирлĕ тесе йышăннă, республикăра политикăлла ĕçсене вăйлатма, ленинла-сталинла наци политикине çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пыма, парти, совет тата хуçалăх органĕсенчи ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеме Литва халăхĕ хушшинчен кадрсем пăхса çитĕнтерес, вĕсене хатĕрлес, ĕçе уйăрса лартас ĕçсене лайăхлатма, колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетме конкретлă ĕçсем туса ирттерме палăртнă.

Тăван çĕршывра

Тырпул пухса кĕртме тытăнас умĕн

ДОН çинчи РОСТОВ, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта облаçри колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлура парти обкомĕн секретарĕ Киселев юлташ доклад тунă. Вăл Атăлпа Дон хушшинчи В. И. Ленин ячĕпе тăракан канала тата çĕре шăвармалли системăсем туса пĕтерни май облаçри ялхуçалăхĕ малалла вăйланса пырасси çинчен каласа панă. Облаçри колхозсен 100.000 гектар çĕрне шăвармалла туса çитернĕ.

Тырпулсене шăварса ÿстерес ĕç пуçланнă çеç-ха. Халех ĕнтĕ шăварни пысăк усă пани куранать. Иртнĕ çулта шăваракан çĕр çинче гектартан 200—250 пăт тата 300 пăт таран тырă туса илнĕ. Шăварман çĕрсем çинче те тырпул вăйлă пулнă.

Колхозниксен ĕçри хастарлăхĕ ÿссех пырать. Иртнĕ çулта кашни колхозник вăтам шутпа 443 ĕçкунĕ тунă. Ĕçкунĕсем тăрăх тырă тата ытти продуктсемпе укçа нумайрах валеçсе панă.

Дон тăрăхĕнчи колхозсем тырпул пухса кĕме хатĕрленеççĕ. Ялхуçалăх артелĕсенче тырпула лайăх пăхса ÿстереççĕ. Сумкурăксене химилле майпа пĕтереççĕ. Облаçра 9 пин комбайн шутланать, вĕсемпе мĕнпур тырпулăн 99 процентне пухса кĕртеççĕ. Итемсем çинче тырă тасатассине тата тиессине механизациленĕ. Малта пыракан комбайнерсем хăйсен машинисем çине тырра лайăх тасатмалли, выртса пулнă тырра вырмалли, улăм тата арпана уйрăммăн пухса пымалли хатĕрсем вырнаçтарса лартаççĕ.

Колхозниксемпе механизаторсем тырпула 18—20 кун хушшинче пухса кĕртме, августăн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр государствăна тырă парса татма хатĕрленеççĕ.

Канашлура пулнисем Дон тăрăхĕнчи колхозниксемпе механизаторсене тырпула хăвăрт пухса кĕртме, государствăна тырă срокчен парса татма чĕнсе каланă.

Пропагандистсен курсĕ

Кишинев хулинче пропагандистсен пĕр уйăхлăх курсĕ уçăлнă. Молдаври Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ пухнă çак курсра 250 çын вĕренет. Кăçал Молдавире 1.200 пропагандист вĕрентсе хатĕрлеççĕ. (ТАСС).

Кинорадиоустановка

САМАРКАНД, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Кинап» завод коллективĕ колхоз клубĕсенче, канмалли çуртсенче, санаторисенче тата шкулсенче усă курма кинорадиоустановка туса кăларма тытăннă. Çак установка кинофильмсем кăтартма тата радиопередачăсене итлеме май парать. Унпа граммзапись передачисем тума та усă кураççĕ.



Вăрçă вăхăтĕнче гитлеровецсем Ленинград хулине пысăк сиен кÿнĕ. Вăрçă хыççăн, партипе правительство тăрăшнипе, вăрçă сиенĕсене пĕтерес, хулана юсас тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕçсем тунă. Петродворецри чаплă фонтансене юсанă. Кунта нумай пулмасть 125 фонтан ĕçлеме пуçланă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Петродворецра.

И. БАРАНОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

А. М. Горькие асăнса

Совет халăхĕ вырăссен аслă писателĕ А. М. Горький ятне хисеплесе асăнать. Çак кунсенче, вăл вилнĕренпе 17 çул тултарнине асăнса, литература каçĕсем пулса иртеççĕ, генилле писатель çинчен лекцисем ирттереççĕ.

Июнĕн 16-мĕшĕнче Мускаври, литераторсен тĕп çуртĕнче, А. М. Горькие асăнса литература каçĕ пулса иртнĕ.

В. Катаев юлташ хăйĕн сăмахĕнче совет литературине аталантарма А. М. Горький пысăк ĕç тунине палăртнă.

СССР халăх артисчĕ профессор А. Д. Дикий, РСФСР халăх артисчĕ профессор Б. Е. Захава драматургири Горький чĕлхипе характерĕ çинчен каласа панă.

Юлашкинчен Мускаври артистсен концерчĕ пулнă: А. М. Горький çырнă произведенисен уйрăм вырăнĕсене вуласа панă тата унăн пьесисен уйрăм сценисене выляса кăтартнă.

* * *

Июнĕн 18-мĕшĕнче вырăссен аслă писателĕ А. М. Горький вилнĕренпе 17 çул çитрĕ. Пирĕн çĕршывра аслă писатель ятне пĕтĕм халăх чĕрере тытать. Тĕнче культурине пуянлатнă М. Горький произведенийĕсем пĕтĕм халăх тивлечĕ пулса тăчĕç. Горький—миллионшар çынсен юратнă писателĕ.

Пĕтĕм Союзри кĕнеке палати пĕлтернĕ тăрăх, Совет влаçĕ пуçланнăранпа А. М. Горький произведенисене Совет Союзĕнче 72.577 пин экземпляр пичетлесе кăларнă. Вĕсене 71 халăх чĕлхипе кăларнă. «Амăшĕ» ятлă повесть пирĕн çĕршывра анлăн саралнă. Çак кĕнекене 39 халăх чĕлхипе 148 хутчен пичетлесе кăларнă. Унăн тиражĕ 41 миллион патне çитет. «Ача чухне», «Çынсем патĕнче», «Манăн университетсем» ятлă произведенисене те нумай хутчен кăларнă.

А. М. Горький сочиненийĕсене пичетлесе кăларасси вĕçленсе пырать. Сочиненисене 30 томпа кăларма палăртнă пулсан, 24 том пичетлесе кăларнă та ĕнтĕ. Кăçал Гослитиздат М. Горький калавĕсен пуххине пысăк тиражпа кăларма палăртнă.

Мускаври театрсем çак кунсенче Горький çырнă пьесăсене лартса параççĕ. (ТАСС).

Смоленск хулинче

СМОЛЕНСК, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Вырăссен авалхи хулине вăрçă вăхăтĕнче тăшман ишĕлтерсе хăварнă. Вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăхра Смоленск хулине çĕнĕрен туса лартнă, вăл ÿснĕ, лайăхрах пулса тăнă.

Хальхи вăхăтра хулари Ленински урамра пилĕк хутлă пурăнмалли çурт туса пĕтереççĕ. Юнашарах виçĕ хутлă çурт тăваççĕ. Çав урамрах профсоюзсен çуртĕнче концерт залĕ тăваççĕ. Пржевальски ячĕпе тăракан урамра çĕнĕрен пилĕк çурт тума пуçланă.

Юлашки 9 çул хушшинче Смоленск хулине юсама миллиард тенке яхăн расходланă. Строительство сарăлсах пырать. Кăçал нумай хваттерлĕ 40 çурт туса пĕтерме палăртнă. Ачасем валли 6 ача саччĕ, пионерсен çурчĕ, шкул тăваççĕ.

Хулана илемлетме кăçал, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, икĕ хута яхăн нумайрах укçа уйăрса панă.

Стахановла предприяти

АЛМА-АТА, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Алма-Атари механически завод коллективĕ çур çулхи производство планне тултарнă. Предприятире çĕнĕрен вуншар йышши продукци туса кăларма тытăннă. 160 хăватлă конвейер тата лентăллă транспортерсем туса çĕнĕ стройкăсене ăсатнă. Ĕçлекен электростанцисем валли оборудовани нумай туса панă.

Хальхи вăхăтра заводри кашни рабочи вăтам шутпа сменăри нормăна икĕ хут тултарса пырать.

Заводри кашни пилĕк рабочирен пĕри—рационализатор. Нумай стахановецсем пилĕк çуллăх задание пурнăçланă.

Государствăна—тырă

КАРШИ, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Кашка-Дарья облаçĕнчи тĕштырă акса тăвакан колхозсем хĕрсех тырă выраççĕ. МТС-сенчи комбайнерсем тырпул пухса кĕртес ĕçе пысăк хăвăртлăхпа туса пыраççĕ. Бешкент МТС-ĕнчи механизаторсем стахановла ĕçлеççĕ. Хайрулла Шерматов, Курбан Идыев, Шарап Асланов тата ытти комбайнерсем, сехет графикĕ тăрăх ĕçлесе, кашни кун 20-шер гектар çинчи тырпула пухса кĕртеççĕ, нормăна икĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

Карши, Гузар, Бешкент тата Кассан районĕсенчи колхозниксем тырпул пухса кĕртме малтан тытăннă. Вĕсем хĕрлĕ обозсем туса, хатĕрлев пункчĕсене тырă леçсе параççĕ.

* * *

КИЕВ, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Киев облаçĕнчи «Заготзерно» пункчĕсем кăçал пухса кĕртекен тырра йышăнма хатĕрленсе çитнĕ.

Хатĕрлев пункчĕсенче тырă пушатас тата тиес ĕçе механизациленĕ. Унта механизмсем нумай вырнаçтарса лартнă. Тырă йышăнас ĕçе 90 процент таран механизациленĕ.

«Заготзернон» Звенигород, Черкасск, Сквир, Васильковски тата Жашковски пункчĕсенче куçса çÿрекен электростанцисем вырнаçтарса лартнă. Çапла вара Киев облаçĕнчи «Заготзерно» пункчĕсене пурне те электрификацилесе çитернĕ.

Çурçĕр енче пахча çимĕçсем ÿстереççĕ

УЛАН-УДЭ, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Бурят-Монгол АССР-ĕн çурçĕр енчи аймакĕсенче—Баунтовски, Çурçĕр Байкал тата Окински аймаксенче çĕрулмипе пахча çимĕçсем лартса пĕтернĕ. Кунта çĕр нихăçан та пĕтĕмпех ăшăнса çитмест. Çавăнпа иртнĕ вăхăтра пахча çимĕçсем лартман. Халĕ нумай колхозсемпе совхозсем пахча çимĕçсем лартса ÿстереççĕ. Çĕршер гектар çине пахча çимĕç лартнă.

Республикăри хуласемпе район центрĕсенче

Октябрь çĕнетнĕ ял

Октябрьски—район центрĕ. Вăл Атăлтан вунă километрта. 1939 çулччен Ĕсмĕл ятлă пулнă. Çав çул ăна район центрĕ тунă, Октябрьски тесе ят панă.

Ĕсмĕл ялĕ витĕр Мускавран Çĕпĕре каякан мăн çул иртет. Çак çул тăрăх ĕлĕк почта, патша чиновникĕсем иртсе çÿренĕ. Çак çул тăрăхах Çĕпĕре ссылка ямалла тунă çынсене пинĕ-пинĕпе илсе кайнă. Çавăнпа кунта ĕлĕкех почта уйрăмĕн кантурĕ тата этап пункчĕ пулнă. Çапла вара ĕлĕкхи Ĕсмĕл çыннисем Çĕпĕре хăваласа кайнă революционерсене сахал мар курнă.

Çак мăн çулпах 1833 çулта Ĕсмĕле вырăс халăхĕн поэчĕ А. С. Пушкин çитнĕ. Вăл кунта пĕр каç выртнă, почта уйрăмĕнче лашасене улăштарнă та тепĕр кунне Хусаналла тухса кайнă.

Октябрьскинчен (ĕлĕкхи Ĕсмĕлтен) инçе мар ялта вырăссен паллă ученăйĕ, Китай çĕршывне тĕпчесе вĕренес тĕлĕшпе паха ĕçсем тунă И. Бичурин çуралса ÿснĕ. Кăçал кунти ĕççыннисем хăйсен чаплă землякĕ вилнĕренпе 100 çул тултарнине паллă турĕç.

1859—60 çулсенче Ĕсмĕлте больница ĕçлеме пуçланă. Унта пурĕ те пĕр фельдшер тата унăн помощникĕпе сторож кăна ĕçленĕ. Çитмĕл çул каярах ялта пуçламăш шкул уçнă.

Çав çулсенчех Ĕсмĕлте пасар пулса иртме тытăннă. Пасара таврари—Çĕрпÿ, Сĕнтĕрвăрри çыннисем, чăвашсем, марисем, тутарсем нумай çÿренĕ. Суту-илÿ пуçланнă май кунта хупахсем, эрех лавккисем чылай уçнă. Ĕсмĕл çыннисене усламçăсем, улпут-хуçасем, тĕн çыннисем улталаса пурăннă.

1917 çулта Октябрьти Социализмла Аслă революци пĕтĕм чăваш ĕç халăхпе пĕрле, Ĕсмĕл çыннисене те ирĕке, çутта тухма май панă. Совет влаçне хапăлласа кĕтсе илнĕ, çĕнĕ, телейлĕ пурнăç тума тытăннă. Совет влаçĕн çулĕсенче ял сăн-сăпачĕ çĕнелсе улшăнма тытăннă. Кунта çичĕ çул вĕренмелли шкул, тĕрлĕ культурăпа çутĕç учрежденийĕсем ĕçлеме пуçланă.

Юлашки 10—12 çул хушшинче Октябрьски ялĕ хăвăрт çĕнелсе улшăнса пычĕ. Кунта промышленность предприятийĕсем ĕçлеме пуçларĕç. Культурăпа çутĕç учрежденийĕсен хисепĕ чылай ÿсрĕ.

«Большевик» промартель ĕçне палăртмалла. Çак артель ĕççыннисене куллен кирлĕ таварсем нумай туса кăларать. Вăл кăçалхи пилĕк уйăх планне 140 процент ытла тултарнă. Кăçал артель Атăл хĕрринче хăма çурмалли çĕнĕ цех уçрĕ.

Районти промысла артелĕсем продукци туса кăларассине ÿстерсех пыраççĕ. 1951 çулта, 1940 çулхипе танлаштарсан, продукци туса кăларасси 1,7 хут ÿснĕ.

1951 çулта район центрĕнче вăтам шкул валли икĕ хутлă пысăк çурт туса лартнă. Халĕ çак шкулта 700 çамрăк вĕренет. Шкулта 37 учитель ĕçлет.

Совет влаçĕ çулĕсенче халăх сывлăхне сыхлас ĕç питех те хăвăрт лайăхланса пырать. Больницăра рентген, хирурги, шăл, куç тата ытти тĕрлĕ чирсенчен сыватмалли уйрăмсем ĕçлеççĕ, чирлĕ çынсене выртма стационар пур.

Район центрĕнче темиçе культурăпа çутĕç учрежденийĕ ĕçлет. Пирĕн пата Шупашкарти театрсен коллективĕсем килсе постановкăсем кăтартаççĕ, опытлă лекторсем лекцисем вулаççĕ. Район центрĕ çулсеренех илемленсе пырать. Нумаях пулмасть кунта шыв хăй тĕллĕн юхса тăракан водопровод туса пĕтерчĕç. Энĕш юханшывĕ урлă пысăк та илемлĕ кĕпер, шыв тăмалли кÿлĕ туса пĕтереççĕ. Район центрне илемлетме çулсеренех йывăçсем нумай лартаççĕ.

Юлашки çулсенче туса лартнă çĕнĕ те пысăк çуртсем ĕлĕкхи пĕчĕк çуртсем хушшинче питех те илемлĕн курăнаççĕ. Кăçал учрежденисем валли икĕ хутлă çĕнĕ çурт тумалла, сĕт-çу заводне туса пĕтермелле, икĕ хваттерлĕ çуртсем лартмалла.

Район центрĕнче Молотов ячĕпе тăракан колхоз ĕçлет. Вăл техникăлла культура—хăмла ĕрчетес тĕлĕшпе паха тĕслĕх кăтартать.

Районти ĕççыннисем çурхи ĕçсене ăнăçлăн вĕçленĕ хыççăн юрă праçникне хаваслăн ирттерме хатĕрленеççĕ. Колхоз уй-хирĕсенче, урамсенче, культурăпа çутĕç учрежденийĕсенче. кассерен хаваслă юрăсем шăранаççĕ. Часах юрă праçникĕ пулать. Ĕççыннисем хăйсене телейлĕ те тулăх пурнăç туса панăшăн Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине мухтаса юрлаççĕ.

Н. ФИЛИППОВ,—райсовет исполкомĕн председателĕн заместителĕ.



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Октябрьскинчи çу заводĕ (сулахайра) тата вăтам шкул çурчĕ (сылтăмра).

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Социализмла ăмăртăва ертсе пырасси— пуçламăш парторганизацин ĕçĕ

Партин пуçламăш организацийĕсем умĕнче тăракан тĕп задачăсенчен пĕри вăйĕççыннисен массисене социализмла ăмăртăва анлăн хутшăнтарасси.

Канаш районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизацире çак ĕçпе çăмăлла вара тĕплĕн шута илмесçĕ. Çавна пула та ĕнтĕ юлашки вăхăтра колхозниксем хушшинчи ăмăрту сӳрĕккĕн пулса пырать.

Колхоз членĕсем кăçал кашни гектартан 14,3 центнер тĕштырă туса илессишĕн кĕрешме сăмах панă, вĕсем кӳршĕри «Коммунар» артель членĕсене хăйсемпе ăмăртă ĕçлеме чĕннĕ. Анчах та колхозри парторганизаци колхозниксене хăйсен обязательствисене пурнăçлама пулăшас тĕлĕшпе нимĕн те туман, обязательствăсем пурнăçланса пынине тĕрĕслес ĕçе пачах йĕркелемен.

Колхозра пурĕ 7 бригада. Вĕсенчен 4-шĕ — уй-хир бригадисем, ыттисем пахча çимĕç, выльăх апачĕ хатĕрлес, çурт-йĕр тăвас тĕлĕшпе ĕçлесçĕ. Парти организацийĕн секретарĕн Н. Ильин юлташăн шухăшĕпе, уй-хир бригадисем пĕрпĕринпе ăмăртса ĕçлесçĕ.

Тĕрĕссипе илсен, колхозри уй-хир бригадисен ăмăртăвне йĕркелемен, бригада пухăвĕнче «çав бригадăна ăмăртăва чĕнес» тесе йышăннă та... тек ун çинчен аса та илмен.

Ăмăрту хăватланса, çĕкленсе пытăр тесен, парторганизацин тата унăн агитколлективĕн колхозниксене кулленхи ĕçри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене кăтартса парассине йĕркелемелле. Çапла тусан çеç ăмăртакансен йышĕ, хастарлăхĕ, пуçарулăхĕ ӳссе пыма пултарать. Анчах та кунти парторганизаци ăмăрту итогне туса хăлăха хавхалантарса пымасть.

Парти организацийĕнчи коммунистсене пурне те политикăлла-массăлла ĕç тума бригадăсем çумне çирĕплетнĕ. Анчах коммунистсем бригадăсенче пуху иртнĕ чухне кăна пулаççĕ, ытти вăхăтра колхозниксен ăмăртăвне организацилеме пулăшмаççĕ. Парторганизаци секретарĕ Ильин юлташ коммунистсене, пуху иртнĕ хушнисĕр пуçне, урăх нимĕнле поручени те памасть. Çавăнпа ĕнтĕ бригадăсенче коммунистсен ролĕ кирлĕ чухлĕ сисĕнмест.

Колхозри социализмла ăмăртăва вăйлатас тесен, парторганизацин бригадăсенчи массăлла-политикăлла ĕçе куллен ертсе пымалла. Ăмăртăва ертсе пынă чухне уйрăмах малта пыракансен опытне сарас ĕçе манма юрамасть. Маленков ячĕпе тăракан колхозра ĕçре малта пыракансем сахал мар. Сăмахран, А. Сидоров юлташ ертсе пыракан 4-мĕш уй-хир бригади çуллен пысăк тухăçлă тырпул туса илет. Пĕлтĕр вăл бригада кашни гектартан 27-шер центнер пăрçа, 19-шар центнер тулă туса илнĕ. Бригада кăçал та çурхи ĕçсене ытти бригадăсенчен маларах вĕçленĕ, бригада членĕсем тырпулсене пăхса ӳстерес тĕлĕшпе те тăрăшарах ĕçлесçĕ. Производствăн ытти участокĕсенче те лайăх тĕслĕхсем сахал мар. Акă, Е. Вишневская дояркăна илер. Вăл ытти сенни пек условирех сĕт тухăçлăхне чылай ӳстерме пултарнă. Анчах та парторганизаци колхозра малта пыракан колхозниксен опытне сарассипе нимĕн те тумасть.

Социализмла ăмăртăва колхозра ялхуçалăх çулĕн кашни тапхăрĕнче хăйне майлăрах организацилеме тивет. Халĕхи вăхăтра колхозри 3 бригада шыв тытмалли пĕвесем тăвас тĕлĕшпе ĕçлет. Икĕ бригадăри колхозниксем строительство бригадинчи юлташсене саман кирпĕч çапма пулăшаççĕ. Ыттисем—çул-йĕр строительствинче е калчасене пăхса ӳстерес, тырпул пуçтарса кĕме хатĕрленес, выльăх-чĕрлĕх пăхас тĕлĕшпе ĕçлесçĕ т. ыт. те. Çак ĕçсене хăвăртрах та лайăхрах тăвас тесен, социализмла ăмăртăва кирлĕ пек йĕркелемелле. Анчах парти организацийĕн секретарĕ Ильин юлташ ытти мĕнпур колхозниксен ăмăртăвне йĕркелеме пулăшман кăна мар, хăй ертсе пыракан строительство бригадинче те ăмăрту организацилемен.

Политикăлла-массăлла ĕçре пысăк çитменлĕхсем пурри КПСС Канаш райкомĕ пуçламăш парторганизацине кирлĕ пек ертсе пыманни çинчен калать. Парти райкомĕн работникĕсем ку колхоз малта пынă пирки парти организаци те лайăх ĕçлет тесе шутлаççĕ пулас. Юлашки вăхăтра парти райкомĕ кунти парторганизацин ĕçĕпе интересленме пăрахнă. Кăçал кунта пурĕ те пĕр инструктор кăна пынă. Вăл та парти организацийĕн ĕçне сахал тишкĕрнĕ.

П. ЩИПЦОВ.
(Хамăр корр.).

Пĕр занятире

«Чăвашстрой» трестĕнчи пуçламăш парторганизаци çумĕнче парти историне вĕренмелли кружок иккĕмĕш çулхи программăпа ĕçлерĕ. Вĕренекенсем итоглă занятисем иртtermелли куна пысăк хаваслăхпа кĕтрĕç.

Кружокра вĕреннĕ юлташсем пурте (38 çын) занятие ытти вăхăтринчен иртерех пухăннă. Занятисем иртterекен пӳлĕмре вара паян ытти кунхинчен уйрăмрах. Стенасем çинче наглядлăй пособисем, политикăлла тата экономикăлла географи карттисем, КПСС ертсе пынипе пирĕн Тăван çĕршывра çав тери пысăк ӳсĕмсем туни çинчен калакан диаграммăсемпе таблицăсем ытларах. Пысăк плакат. Ун çине социализмăн экономикăлла тĕп законне лайăх курăнмалла çырса хунă, халĕхи вăхăтри капитализмăн тĕп законĕ çинчен каланă.

Пропагандист калаçура кирлĕ пулакан литература, КПСС XIX-мĕш съезчĕн материалĕсенче тĕл пулакан терминсем хатĕрленĕ, çĕнĕ хаçатсемпе журналсем те илсе пынă. Вĕсене сĕтел çине йĕркелесе хунă.

Заняти малтан палăртнă вăхăтра — касхине 7 сехетре пуçланчĕ. Пропагандист Студенецкий юлташ занятин тĕллевĕ çинчен кĕскен каласа пачĕ, ĕç планĕпе паллаштарчĕ. Кружок руководителĕ пĕтĕм вĕренекенсем умне ыйту тăратать: «Вăрçă хыççăнхи çулсенче икĕ тĕрлĕ лагерь пулса тăнине— агрессилле, демократие хирĕçле тата мирпе демократишĕн кĕрешекен лагерь пулса тăнине мĕнле ăнлантарса памалла?» Пропагандист ыйтăвĕ çине ответ пама хапăл тăвакансем нумай. Кама сăмах памалла? Кружок руководителĕ КПСС членĕн кандидатне Сафайлов юлташа сăмах парать.

Сафайлов юлташ ĕлĕк нумаях вĕренмен. Çавăнпа та вăл малтанлăха кружок занятийĕсенче те хăйĕн активлăхне палăртайман пулнă, юлташĕсем умĕнче именерех тăнă. Пропагандистпа кружок членĕсем Круглов, Краснов, Александров, Михайлов, Павлова тата ытти юлташсем Сафайлов юлташа хăйĕн пĕлĕвĕпе активлăхне ӳстерме чылай пулăшнă.

Сафайлов юлташ пропагандист ыйтăвĕ çине тĕплĕ те ăнланмалла ответлерĕ. Хăйĕн ответне çирĕплетсе парас шутпа, вăл указка илчĕ те «1929—1951-мĕш çулсем хушшинче ССР Союзĕнче тата капитализм çĕршывĕсенче промышленность продукцийĕ мĕнле ӳсse пыни» çинчен калакан таблица патне тухрĕ. Вĕренекен капитализмла Америкăн промышленность производстви 1929 çултан пуçласа 1939 çулччен пĕр вырăнта тăни çинчен, ун хыççăн иккĕмĕш тĕнче вăрçине урса кайса хатĕрленнĕ май кăна пăртак малалла кайни çинчен каласа пачĕ. Сафайлов юлташ капитализмла çĕршывсенче вăрçа хатĕрленни çинчен, вăрçă капиталистсене мĕнле услам пани çинчен каларĕ. Унтан вăл ССР Союзĕнчи промышленность вĕçĕмсĕр аталанса пыни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ, тĕнчери икĕ тĕрлĕ лагерь пулнин сăлтавĕсене тата вĕсен хушшинчи пысăк уйрăмлăха примерсемпе ăнлантарчĕ.

Ку ответ пурне те тивĕçтернĕ май пропагандист вĕренекенсем умне çĕнĕ ыйту кăларса тăратать. Кружок членĕсем вĕреннĕ материала часах астуса илесçĕ. Ответлеме кăмăл тăвакансем хальхинче те нумай. Круглов коммунист сăмах илет. Круглов юлташ империализм лагерĕнче хирĕ-хирĕçлĕх вăйланса пыни çинчен тăракан ыйтăва çутатса парать, капитализмла çĕршывсем хушшинче вăрçăсем пур-пĕрех пуласси çинчен тăракан чăнлăх çинчен ăнлантарса парать. Вĕренекен материала ку тĕлĕшпе И. В. Сталин юлташ каланă сăмахсемпе çирĕплетет. Çак ыйтăва сӳтсе явнă чухне ытти юлташсем те тухса калаçрĕç. Вĕсем капитализмла çĕршывсенчи ĕçсыннисен хĕн-хурлă пурнăçĕ тата та начарланса пынин, империализмла çĕршывсем хушшинче хирĕ-хирĕçлĕх мĕншĕн вăйланса пынин сăлтавĕсене уçса пачĕç.

Пропагандист кружок членĕсене хăйсен шухăшĕсене каласа пама чармасть, кам та пулса тĕп ыйтуран ытларах пăрăнса кайсан кăна кĕскен асăрхаттарса илет. Пĕр-пĕр вĕренекен ыйтăва кирлĕ таран çутатса параймасан, пропагандист ытти юлташсене тухса калама сĕнет. Сăмахран, Федоров юлташ капитализм çĕршывĕсенче вăрçа хатĕрленнĕ май экономика вăйсăрланса пыни çинчен каларĕ. Унăн сăмахĕ хыççăн пропагандист вĕренекенсенчен кам хушса калама кăмăл туни çинчен ыйтрĕ. Федоров юлташ калани çумне хушса калас текенсем нумай тупăнчĕç. Кунтă лайăх енчен тата çакна палăртмалла: тухса калакансем малтан ответленĕ юлташăн шухăшне каламарĕç, ыйтăва çĕнĕ тĕслĕхсемпе тарăнлатма тăрăшрĕç. Сăмахран, Александров юлташ Америка империалисчĕсем урса кайса вăрçа хатĕрленни çинчен çĕнĕ тĕслĕхсем илсе кăтартрĕ. Ытти юлташсем те ку тĕлĕшпе юлашки вăхăтра хаçатсенче пичетленнĕ материалсенчи шухăшсене хушса каларĕç.

Михайлов, Краснов, Болоцкий, Павлова тата ытти хăшпĕр юлташсем вĕреннĕ материала уйрăмах лайăх çутатса пачĕç. Вĕсем материала хамăр вырăнти ĕçсемпе çирĕплетсе калани итлекенсене кăмăла кайрĕ. Павлова юлташ, акă, пропагандист панă ыйтăва ответленĕ май, Чăваш республикинчи ĕçсыннисем вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе коммунизм тăвас ĕçре пысăк ӳсĕмсем туни çинче чарăнса тăчĕ. Вăл уйрăмах Шупашкарти пулас гидроэлектростанцин пĕлтерĕшĕ çинчен, хулари предприятисем кăватлă техникăпа пуянланса пыни çинчен каларĕ.

Заняти активлă иртрĕ. Юлашкинчен пропагандист вĕренӳ çулĕн итогĕсем çинчен вывод туса каласа пачĕ. Кружок членĕсем çулталăк тăрăшулăх тăрăшса вĕренни курăнчĕ. Занятисем яланах вăхăтра, йĕркеллĕ иртнĕ. Вĕренекенсен политикăлла тавракурăмĕ чылай ӳснĕ, вĕсем марксизм-ленинизм теорине малалла вĕренме пахa опыт тунă.

Вĕренекенсем килес çул пирĕн мухтавлă Коммунистсен партийĕн историне тата тăрăшарах вĕренме, хăйсен ĕç хастарлăхне ытларах вăйлатма пулчĕç.

М. БУРКОВА,
КПСС Шупашкар хула комитечĕн библиотека заведующийĕ.

Тырпул пухса кĕртмелли ĕç планĕ

Çĕрпӳ районĕнчи „Новая жизнь“ колхозра

Колхозсен уй-хирĕсем çине пăхса кашни ĕççынни хĕпĕртесе савăнать. Кĕрхи тырă та, çуртрисем те патвар хунаса çитĕнеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем халĕ пĕр шухăш-кăмăлпа хавхаланса ĕçлесçĕ: тырпула лайăх пăхса çитĕнтерер, ăна вăхăтра, пĕр тăкаксăр пухса кĕртер, государство умĕнчи обязательствăсене пурне те числăн пурнăçлар, теççĕ вĕсем.

1953 çулта пирĕн колхозăн пĕлтĕрхинчен ытларах ĕç тумалла пулать. Вăл акă мĕнрен килет: ытти çулсемпе танлаштарсан, кăçал тырпул акма государство панă заданисене пур культурăсем енĕпе те числăн пурнăçлама тăрăшрăмăр. Кашни культурăна, унăн уйрăмлăхне кура, кирлĕ пек пăхса ӳстермелле, тăкаксем ан пулччăр тесен, ăна вăхăтра пухса кĕртмелле.

Колхозăн кăçал 300 гектар çинчи çаран утине, 72 гектар çинчи пĕр çул тата 80 гектар çинчи нумай çул ӳсекен курăксене пухса кĕртмелле. Çуркунне колхоз 501 гектар, вăл шутран: тулă —161 гектар, вир—30 гектар, пăрçа—86 гектар, сĕлĕ—171 гектар, нумай çул ӳсекен курăксем (вăрлăх валли)—70 гектар, силос культурисем—21 гектар, выльăх кăшманĕ—15 гектар, кантăр—45 гектар, пахча çимĕçсем—20 гектар, çĕрулми—75 гектар акса-лартса хăварчĕ. Кĕрхи тырăсем пухса кĕртмелли лаптăк та пĕчĕк мар. Пĕтĕмпе иртнĕ кĕркунне 372 гектар, вăл шутран 46 гектар кĕрхи тулă акса хăварнă.

Çак тырпула вăхăтра, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртес пулать. Унсăр пуçне, хĕрсе тырă вырнă тата хамăр обязательствăсем тăрăх государствăна тырă леçсе панă вăхăтра 164 гектар çĕртме пуссине сухаламалла, 412 гектар кĕрхи тырăсем акса хăвармалла, 150 гектар çинчи хăмăла сухаласа пăрахмалла. Тырпул пухса кĕртме тытăниччен çĕрулмипе выльăх кăшманĕсен речĕсем хушшисене кăпкалатса тухмалла.

Çапла ĕнтĕ, пĕр вăхăтрах нумай ĕç тумалла пулать. Уй-хирти пĕтĕм ĕçе йĕркеллĕ, вăхăтра тата типтерлĕ тăвас тесен, комбайнсемпе, тракторсемпе тата колхозри ытти мĕнпур машинăсемпе, çавăн пекех мĕнпур ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курас пулать. Ĕçре тĕрлĕ йывăрлăхсем килсе тухас мĕн пулсан, вĕсене çиĕнчех пĕтерме хуçалăхри пĕтĕм резервсене малтанах палăртса хуни вырăнлă. Кунпа пĕрлех иртнĕ çулсенче пухнă опыта та шута илес пулать.

Тырпул пухса кĕртнĕ тата государствăна тырă панă вăхăтра пĕтĕм ĕçе ăнăçлă йĕркелесе пырас тесе, пирĕн колхоз правленийĕ ятарласа ĕç планĕ турĕ. Ку плана тума ялхуçалăх специалисчĕсене тата малта пыракан колхозниксене хутшăнтартăмăр. План тунă чухне эпир хамăрăн вăйсене тата резервсемпе ресурссене тĕплĕн шута илтĕмĕр. Çак статьяра эпир хамăр ĕçсен планĕ çинчен каласа парасшăн.

Вăрлăх участокĕсенчи тырпула пухса кĕртес ĕç планра уйрăм вырăн йышăнать. Паллах, вăрлăх участокĕсенчи пур культурăсене те уйрăм пухса кĕртмелле, çапнă хыççăн уйрăм кĕлете хумалла. Вăрлăх участокĕсенчи тырпула Б. Коночкин комбайнер пухать. Вăрлăхлăх тырра тасатса, вăрлăх кĕлетне хума уйрăм çынсем палăртса хунă. Вăрлăхлăх тырра усрама колхоз çĕнĕ зернохранилище тăвать. Вăрлăхлăх çĕрулмине икĕ хранилищĕне хума палăртнă, вĕсенчен пĕрне кăçал тăватпăр. Пур зернохранилищĕсене те, çавнашкалах çĕрулмипе пахча çимĕç хранилищисене те вăхăтра, тырпул вырма тухиччен, тасатса тĕплĕн дезинфекцилетпĕр.

Ĕçсене тумалли сроксем

Тырпул пухса кĕртмелли планра уйрăм ĕçсене тумалли график пăллă вырăнта тăрать. Уйрăм бригадăсем валли те, пĕтĕм колхоз валли те график тунă. График тунă чухне агротехника мĕн хушнине пĕтĕмпех шута илнĕ. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра колхозăн темиçе тĕрлĕ ĕç, вăй нумай кирлĕ ĕçсем тумалла пулать. Колхоз малтан çаран утине тата акнă курăксене çулма тытăнать. Утă çулса капана хывас, çĕртме пуссине ĕçлесе хатĕрлес, сум çумлас тата касă тăрăх акакан культурăсен рет хушшисене кăпкалатас ĕçсене тырă вырма тухиччен (график тăрăх 10 ĕçкунĕ хушшинче) туса çитермелле. Кĕрхи культурăсене пухса кĕртме колхоз июлĕн 25-мĕшĕнче тухса, 8 кун хушшинче пухса кĕртме, çурхи культурăсене 9 кун хушшинче пухса кĕртме, 22 кун хушшинче кĕрхи тата çурхи культурăсене капана хывса çитерме палăртатать. Тырпул пухса кĕртме тухнă хыççăн тăваттăмĕш кунĕнче колхоз авăн çапма тытăнать. Авăна пуринчен ытла МТС «МК-1100» молотилкăпа çапать, договор тăрăх унăн 300 тонна тырă çапмалла, ытти тырра лашапа ĕçлемелли молотилкăсемпе çапатпăр. Молотилкăсене электромоторпа ĕçлеттеретпĕр. Тĕштырăсене 20 кунта çапса пĕтеретпĕр, 70 гектар нумай çул ӳсекен вăрлăхлăх курăка МТС 12 кун хушшинче çапса пĕтерет. «МК-1100» молотилка çинче машинист пулма С. Пыренков юлташа уйăрнă (тракторист Демахин), лашапа ĕçлекен молотилкăсемпе Синдячкинпа Шумалкин юлташсем ĕçлесçĕ. Моторсемшĕн ответлă пулма А. Корчаков монтера уйăрнă.

Тĕштырăсене пухса кĕртнĕ вăхăтра колхозăн ытти ĕçсене те тумалла пулать. Пирĕн колхоз условийĕсенче кантăр тăтас, çĕрулми кăларас, силос культурисене пухса кĕртес ĕçсем пысăк вырăнта тăраççĕ. Каярахпа тымарçимĕçсене пухса кĕртмелле пулать. Силос культурисене, çĕрулмине тата тымарçимĕçсене вăхăтра, тăккаламасăр пухса кĕртни выльăх-чĕрлĕх валли сĕтеклĕ апатсем çителĕклĕ хатĕрлеме май парать. Силос хывма çĕрулми, кăшман, пахча çимĕç çеçкисемпе, çавнашкалах çумкурăксемпе усă куратпăр. Силос хывма çуркунне шыв илекен çарансене тата кăштах нумай çул ӳсекен курăксене иккĕмĕш хут çулма палăртнă.

Пусана 5 кунта, кантăрне те 5 кунта татса пуçтарма палăртнă. Çĕрулмине тракторпа ĕçлемелли çĕрулми кăларакан машинăпа 20 кун хушшинче (сентябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне) кăлармалла, силос культурисене 5 кунта пухса кĕртмелле. Силос курăкне тракторпа ĕçлемелли машинăпа 6 кунта тураса пĕтермелле. Выльăх кăшманĕсене 5 кунта (алăпа) кăларса пĕтермелле.

Тырпул пухса кĕртмелли сроксене кĕскетнĕ. Ĕç нормисене пурнăçран илнĕ. Иртнĕ çулта пирĕн колхозри малта пыракан çынсем çав нормăсене тултарма май пуррине ĕçре кăтартса пачĕç. Сăмахран, самоходнăй комбайн валли кулленхи задани 12 гектар, лашапа ĕçлемелли машина валли сменăри задани—4,5 гектар, трактор хыççăн кăкаракан утă çулмалли икĕ машина валли кулленхи задани 20 гектар, «МК-1100» молотилка валли сменăри задани 12 тонна т. ыт. те. Ĕçсене анлăн механизацилени, ĕçе тĕрĕс организацилени, колхозăн шалти ресурсĕсене пĕтĕмпех мобилизацилени пур ĕçсене те çӳлте кăтартнă сроксенче тума май парать.

Тырпул пухса кĕртмелли ĕç хатĕрĕсем

Тырпул пухса кĕртме тата çав вăхăтри ытти ĕçсене тума пирĕн пĕрлешсе пысăкланнă тата механизациленĕ хуçалăхра вăй çителĕклĕ.

Колхозра Çĕрпӳ МТС-ĕн трактор бригади ĕçлет, ăна В. Баранов бригадир ертсе пырать. Бригадăра 4 трактор, вĕсенчен пĕри—ДТ-54, тепри—СТЗ-НАТИ, виççĕмĕшĕ — урапаллă ХТЗ трактор, тăваттăмĕшĕ—У-2 трактор. Çак бригада колхозра вăй нумай кирлĕ ĕçсене — çĕртме сухине, кĕрхи сухана, акассине тата ытти ĕçсене те пĕтĕмĕшпех механизацилерĕ. Тĕштырăсем, курăксем пухса кĕрес ĕçе, çавнашкалах касă тăрăх акакан культурăсен рет хушшисене кăпкалатас ĕçе пĕтĕмпех машинăсемпе тăватпăр. Кĕлтесене сыхнă тата çулса типĕтнĕ утта капана хывнă çĕрте, тымарçимĕçсемпе пахча çимĕçсем пухса кĕнĕ çĕрте кăна алă ĕçĕпе усă куратпăр.

Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра хуçалăхри ытти ĕçсем те чарăнса тăмалла мар, производствăлла планра кăтартнă ĕçсене—пахча çимĕç ӳстерес ĕçе, сад ĕçне, хăмла туса илес ĕçе, выльăх-чĕрлĕх витисемпе ытти хуралтсем тăвас тата юсас ĕçе, силос хывас ĕçе тата ытти ĕçсене те йĕркеллĕ туса пыма палăртнă.

Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра колхозра виçĕ комбайн ĕçлет, вĕсенчен иккĕшĕ «С-4» самоходнăй комбайнсем, тепри — «Коммунар». Кунсăр пуçне, МТС тырпул пухса кĕме 5 жатка, тракторпа утă çулмалли пĕр агрегат, комбайн хыççăн кăкармалли трактор кĕреплисем, «МК-1100» молотилка уйăрса парать. Касă тăрăх акакан культурăсен рет хушшисене ХТЗ-7 тракторпа кăпкалататпăр.

Çавăнпа пĕрлех колхоз правленийĕ, хăйĕн туртăм вăйĕпе ĕç хатĕрĕсене шута илсе, тырпул пухса кĕртме тата çав вăхăтри ĕçсене тума 100 лаша, лашапа ĕçлемелли 6 жатка, лаша кӳлмелли 6 кĕрепле, утă çулмалли 6 машина, виçĕ автомашина, 100 урапа тата кирлĕ таран кĕреплесем, сенĕксем, кĕреçесем т. ыт. те уйăрса хучĕ. Комбайнтан тырă йышăнма тата тасатма 5 итем пулать, кашни итем çине тараса лартатпăр, тараса колхоз амбарĕнче те пулать.

Тырпул пухса кĕртнĕ çĕрте 242 колхозник ĕçлеме пултарать. Кунсăр пуçне колхозра çамрăк ачасем 119 çын тата ватă колхозниксем 73 çын пур. Тырпул пухса кĕртес ĕçе вĕсене те хутшăнтарма пулать. Колхозниксем хушшинче квалификациллĕ, техникăна лайăх пĕлекен çынсем — мотористсем, комбайнерсем, трактористсем, механиксем, электромонтерсем, машинистсем, шоферсем çителĕклĕ.

Утă çулас ĕçе организацилесси

1953 çулта 452 гектар утă, вăл шутра 300 гектар çаран утти çулса илмелле, терĕмĕр. Çаран утине те, пĕр çул тата нумай çул ӳсекен курăксене те эпир тракторпа ĕçлемелли икĕ машинăпа тата лашапа ĕçлемелли утă машинипе çулма палăртрăмăр.

Пучахлă курăксене пуç кăларнă вăхăтра, пăрçа йышши курăксене чечек чăмăртаннă вăхăтра çулатпăр, мĕншĕн тесен ку вăхăтра курăксенче выльăх-чĕрлĕхе кирлĕ тутлăхлă япаласемпе витаминсем ытларах пулаççĕ. Утă çулакан кашни машина валли ялан ĕçлекен колхозниксене çирĕплетнĕ тата утă пухма колхозниксене çителĕклĕ уйăрса панă. Утă çулас, тавăрас, купасем тăвас тата утта капана хывас ĕçсене пĕр-пĕринчен уйăрмалла мар. Çулнă хыççăн виççĕмĕш кун пур бригадăсенче те утта пухса купасем тума, тăваттăмĕш-пиллĕкмĕш кунне капана хывма палăртнă. Кашни утă капанне артель правленийĕ уйăрнă комисси йышăнать. Çав комисси капансене виçсе пăхса, вĕсен йывăрăшне пĕлет, вара утă пăхакана сыхлама парать. Утта приходлама комисси çырнă акта бухгалтерине параççĕ. Утта эпир икĕ сменăпа çулатпăр.

Тырпула комбайнпа тата ытти машинăсемпе пухса кĕртесси

Комбайнсем пĕр чарăнмасăр ĕçлесси МТС-ран кăна мар, колхозран та нумай килет. Çавăнпа та комбайнсен ĕçне колхозăн тырпул пухса кĕртмелли ĕç планĕнче тĕплĕн шута илмелле. Кашни комбайнпа тумалли ĕç калăпăшне МТС-па колхоз тунă договорта кăтартса панă. Çав заданисене тултармаллах, çавăнпа та ăна колхозăн ĕç планне пĕтĕмпех кĕртмелле. Договор тăрăх комбайнпа 600 гектар тырă пухса кĕртмелле. Комбайнпа ĕçлеме чи лайăх участоксене уйăрнă: кĕрхи тулă—46 гектар, ыраш—253 гектар, сĕлĕ—100 гектар, çурхи тулă—161 гектар, кĕрпе тумалли культурăсем—40 гектар. Комбайнерсем — Б. Коночкин, А. Зуев, И. Каршев юлташсем колхоз председателĕпе А. Павлов юлташпа тата колхоз агрономĕпе М. Лукин юлташпа пĕрле участоксене пăхса тухса, машинăсем çӳремелли маршрутсем турĕç. Маршрутсенче хăш культурăна хăçан пухмаллине кăтартнă, машина ĕçлемесĕр кусса çӳрессине май пур таранах чакарнă.

Комбайнсем лайăх ĕçлесси вĕсене мĕнле пăхнинчен нумай килет. Комбайнсем патĕнче ялан ĕçлеме кашни комбайн çумне пĕр автомашина тата тырă тиеме икĕ çын çирĕплетнĕ. Кунсăр пуçне веялкăсемпе сортировкăсем патĕнче ĕçлеме, çавăн пекех комбайн хыççăн улăмпа арпана пухса улăмурине хывма колхозниксем уйăрнă. Комбайнсем вырса çапнă тырра пиллĕк итем çинче тасататпăр, кашни итем çинче пĕрер веялка-сортировка ĕçлемелле. Итем çинче тасатнă тырă колхозăн тырă тасатакан пунктне пырать, кунта икĕ сортировка ОС-1 тата пĕр сортировка ОС-3 ĕçлемелле. Сортировкăсене электромоторсем ĕçлеттереççĕ. Тасатнă хыççăн тырра типĕтмелле мар пулсан, ăна çавăнтах государство элеваторне леçетпĕр, вăрлăх участокĕсенчен пухса илнĕ тырра колхоз амбарĕсене хуратпăр. Нӳрлĕхĕ енчен кондицие ларман тырра типĕтме колхозра икĕ зерносушилка пур, вĕсем электромотор вăйĕпе ĕçлеççĕ. Пĕр зерносушилка (ПЗС-3) сменăра 4—5 тонна, тепри (Висхом) 7—8 тонна тырă типĕтет.

Комбайн хыççăн улăмпа арпана пĕтĕмпех пухса илетпĕр. Иртнĕ çулсенче комбайн хыççăн улăмпа арпана нумайччен пухмасăр выртарнă, çавна пула хĕлле выльăх-чĕрлĕхе пама улăм-арпа çитмен. Кăçал эпир комбайн ĕçлекен участоксенче çав кунах улăмпа арпана пухса илетпĕр. Планра уй-хир бригадисем комбайнсемпе пĕрле мĕнле ĕçлемеллине тĕплĕ кăтартса панă, бункерсенчен тырра комбайнсене чармасăрах пушатма палăртнă. Кашни комбайн патĕнче ĕçлеме 21 колхозник уйăрнă. Çак çынсене артель правленийĕ çирĕплетнĕ.

Комбайнпа пĕтĕмĕшпе пулса çитнĕ тырра кăна пухма юрать, лашапа ĕçлемелли машинăсемпе тырпул шуралса çитсенех вырма тухма пулать. Çавăнпа та колхоз хăйĕн ĕç планĕнче комбайнпа ĕçлеме тытăниччен маларах МТС паракан тата колхозри жаткăсемпе тырă вырма тухма палăртнă. Колхоз тырпул пĕтĕм лаптăкĕпе пулса çитессе кĕтсе тăмасть, вырăн вырăнпа пулса çитнĕ тырра суйласа вырать. Иртнĕ çулхи опыта тата кăçалхи тырпулсене кура, çак майпа 20 гектар пухма палăртнă.

Жаткăсемпе ĕçлеме опытлă çынсем кирлĕ. Колхоз правленийĕ жаткăсемпе ĕçлеме квалификациллĕ çынсене уйăрчĕ: пĕрремĕш бригадăра — К. Буинцевпа И. Буинцев, иккĕмĕш бригадăра — Е. Леонтьевпа Г. Шумалкин, виççĕмĕш бригадăра— В. Алексеевпа В. Каршев, тăваттăмĕш бригадăра — В. Фоминпа Г. Мартынов, пиллĕкмĕш бригадăра (выльăх апачĕ хатĕрлекен бригадăра) — И. Ванюхинпа Г. Картошкин юлташсем ĕçлеççĕ.

Кашни жатка хыççăн кĕлте çыхма ялан ĕçлекен çынсене уйăрнă. Пучахсене лаша кӳлмелли кĕреплесемпе пухатпăр тата çамрăк ачасем алăпа пухаççĕ. Кашни жаткăпа икĕ смена ĕçлеме яланлăхах лашасем çирĕплетсе панă. Жаткăпа вырмалли вырăнсене те малтанах кăтартса хунă.

Малтанхи чи лайăх тырра—государствăна

Государство умĕнчи обязательствăсене числăн пурнăçласси — колхозăн пĕрремĕш заповечĕ. Авăн çапас, тырра тасатса сортлас ĕçе тата транспорт ĕçне тĕрĕс организацилесен кăна çак заповеде вăхăтра пурнăçа кĕртме пулать. Тырпула пухса кĕртмелли ĕç планĕнче çак ыйтусене тĕрĕс татса панă. Малта каланăччĕ ĕнтĕ, колхоз тырпул пухма тухсан тăваттăмĕш кунĕнче авăн çапма тытăнать, кунта МТС молотилки тата колхозăн молотилкисем ĕçлемелле. Тырра тасатса сортлас ĕçе тĕплĕ шухăшласа организациленĕ: тырра итем çине йышăнас, малтанлăха тасатса, ăна сортлакан пункта ăсатас ĕçсене çак весовщиксем туса тăраççĕ: пĕрремĕш бригадăра—Н. Корсаков, иккĕмĕш бригадăра — А. Туманова, виççĕмĕш бригадăра — О. Федотова, тăваттăмĕш бригадăра — А. Романова, пиллĕкмĕш бригадăра — А. Черяев юлташсем. Кунсăр пуçне, кашни итем çинче МТС весовщикĕ пулать. Сортланă тырра йышăнма çак кладовщиксене: сортлă тырра йышăнма А. Мартынов юлташа, апат-çимĕçлĕх тырра йышăнма Б. Романов, Н. Александров, М. Ферапонтов юлташсене уйăрнă. Элеватора яракан тырăран çуррине государствăна, çуррине — натуроплата шучĕпе паратпăр.

Государствăна памалли тырра эпир сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех леçсе паратпăр. Тырă турттарма транспорт бригади организацилетпĕр, унта 18 лав пулать. Транспорт бригадине Романов юлташ ертсе пырать. Бригадăна шăналăксемпе михĕсем çителĕклĕ уйăрса панă. Государствăна тырă памалли плана тултарнă хыççăн, тырра обществăлла фондсем тума зернохранилищĕсене хуратпăр.

Тырпула тăккаламасăр пухса кĕртетпĕр

Тырпула тăккаласа пĕтерни — айăплă ĕç. План тунă чухне эпир тырпула пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме мĕн-мĕн тума кирлине пурне те шута илтĕмĕр. Колхоз тырпула кĕске сроксенче пухса кĕртме палăртрĕ. Кĕске срокра пухса кĕртни — тырпул тăккаланине хирĕç кĕрешме кирлĕ чи паха услови. Планра тырпул вырма вăхăтра тухассине, хăмăла кĕске срокра сухаласа хăварассине палăртнă. Вырнă тырра жатка хыççăн çиĕнчех кĕлте çыхса çĕмел тума тата капана хывма çынсем çителĕклĕ уйăрнă. Комбайнсемпе жаткăсен зерноуловительсем пулаççĕ. Комбайнпа жаткăсем хыççăн ӳккелесе юлнă пучахсене трактор кĕреплипе тата лаша кӳлмелли кĕреплепе, çавнашкалах алăпа та пуçтараççĕ. Пучахсем пуçтарма çамрăк ачасене хутшăнтаратпăр. Улăмпа арпана çиĕнчех улăмурине хыватпăр. Тырра комбайнсем патĕнчен итем çине, элеватора, амбара турттарнă чухне автомашинăсемпе урапасем чарăнакан тĕле шăналăкпа брезентсем саратпăр, михĕсене лайăх юсаса дезинфекцилетпĕр.

Ĕçе организацилени

Тырпул пухса кĕртмелли ĕç планĕ вăл—тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра колхозниксен ĕçне организацилемелли план. Колхозра уй-хир бригадисем тăваттă, выльăх-чĕрлĕх валли апат хатĕрлекен бригада—пĕрре. Кунсăр пуçне колхозра строительство бригади тата пахча çимĕçпе сад бригади пур. Пĕр-пĕр ĕçе тума колхоз правленийĕ опытлă та шанчăклă çынсене суйласа илет. Ĕç планĕнче тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра кашни çын ăçта ĕçлеммеллине кăтартса панă. Колхозниксем сдельщина йĕркипе ĕçлеççĕ. Авăн çапнă, тырă тасатнă чухне тата машинăпа тăвакан ытти ĕçсенче, машина патĕнче пĕр вăхăтрах темиçе колхозник ĕçленĕ çĕрте, ушкăнлă сдельщина йĕркипе ĕçлеççĕ. Кашни колхозник кулленхи нормăна кăна мар, уйрăм ĕçсем тăрăх пĕтĕм сезонти задание те пĕлсе тăрать. Пур агрегатсемпе машинăсем те икĕ смена ĕçлеççĕ. Колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх натурăпа тата укçан аванс вăхăтра парас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем туса иртteretпĕр.

Культурăлла-массăлла ĕç

Колхозри парторганизаци, правленипе пĕрле, тырпула вăхăтра пухса кĕртме, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлама комбайнерсем, бригадăсем, колхозниксем хушшинче социализмла ăмăрту организацилет. Коммунистсене бригадăра ответлă вырăнсене тăратнă. Кашни бригадăра агитаторсем пулаççĕ. Бригадăсене куллен çĕнĕ хаçатжурналсем парса тăмалла. Тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра вунă кунта пĕрре колхозри стена хаçачĕ, бригадăсенче пилĕк кунта пĕрре боевой листоксем тухса тăмалла. Хаçатпа боевой листоксенче тырпул пухса кĕртес ĕç мĕнле пынине, малта пыракансен çитĕнӳĕсемпе вĕсен ĕç меслечĕсене çутатса паратпăр. Колхозра «Хисеп хăми» тăватпăр, унта ĕçре пысăк çитĕнӳ тунă колхозниксен хушамачĕсене кĕртетпĕр.

Культурăлла-массăлла ĕçшĕн ответлă пулма колхозри парторганизаци секретарне Г. Прокопьев юлташа уйăрнă.

Виçĕ уй-хир бригадинче 60 ача валли ача яслисем организацилетпĕр. Çапла вара кăкăр ачи пур колхозницăсем те тырпул пухса кĕртес ĕçе активлă хутшăнма пултараççĕ. Ĕçленĕ вăхăтра бригадăсенче пĕрлешсе апатланассине организацилетпĕр.

Колхоз правленийĕ çирĕплетнĕ çак плана бригадăсенчи производствăлла канашлусенче, трактор бригадинче тĕплĕн сӳтсе явма, унтан колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче пăхса тухма палăртнă.

Колхоз кăçалхи вăйлă тырпула вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пухса кĕртессе, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен пурнăçлассa, ялхуçалăх артелĕн Уставĕ тăрăх обществăлла фондсем çителĕклĕ тăвасса, колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх лайăх тӳлессе çирĕп шанса тăрать.

«Новая жизнь» колхоз председателĕ А. ПАВЛОВ.
Парторганизаци секретарĕ Г. ПРОКОПЬЕВ.
Колхоз агрономĕ М. ЛУКИН.
Уй-хир бригадирĕсем: И. КУЗЬМИН, ИВАНОВ, А. ДЕМАХИН, А. ЗЮЗИН, С. СТОРУБЛЕВ.
Трактор бригадин бригадирĕ В. БАРАНОВ.
Комбайнер Б. КОНОЧКИН.

Паха çул-йĕршĕн!

Работниксен ответлăхне хăпартмалла

Етĕрне районĕнчи колхозниксем Етĕрнепе Асламас, Етĕрнепе Сĕмĕрле хушшинче тата ытти çĕрте те лайăх çулсем сахал мар тунă. Ытти çулсене, ку район çул-йĕр строительстви енĕпе нумай районсемшĕн примерлă пулнă, унăн опычĕпе ытти çĕрте сахал мар усă курнă.

Анчах 1950 çултан пуçласа район çул-йĕр строительстви планне тултарса пымасть. 1951 çулта пĕр колхоз çес государство заданине пурнăçланă. Пĕлтĕр те ĕçре палăă улшăну пулмарĕ. Çапла вара районти вăйпитти колхозниксен вăйĕ çул хушшинче çул-йĕр строительстви енĕпе планпа палăртнинчен çур миллион тенкĕлĕх сахалтарах ĕç тунă.

«Ленинский завет», «Большевик», Молотов ячĕпе, Хрущев ячĕпе, Жданов ячĕпе, Мичурин ячĕпе тăракан колхозсем хăйсен тивĕçне çулсерен ирттерсе пурнăçлаççĕ. Вĕсем тем пек тăрăшса ĕçлесен те район государство заданине пурнăçлаеа пыма пултараймасть, мĕншĕн тесен чылай колхозсен руководителĕсем çул-йĕр строительствине пĕрре те хакламаççĕ. Ильич ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Г. Платонов юлташ) çул-йĕр ĕçĕсен планне 1950 çулта 10 процент, 1951 çулта—12 процент, 1952 çулта—33 процент çеç тултарнă. Андреев ячĕпе, Киров ячĕпе, Шверник ячĕпе, Калинин ячĕпе тăракан колхозсем плана çулсерен тултармаççĕ.

Çул ĕçĕнче хăйне евĕрлĕ уйрăмăх пур. Планпа палăртнă ĕçсене пурне те вăхăтра тата паха тумасан çĕршер сын тăвашни сая каять. Малта пыракан колхозсем хăйсене çирĕплетсе панă участокра çула вăхăтра юсаççĕ, кирлĕ пулсан—çĕнĕрен чул сараççĕ. Вĕсен участокĕсен хушшинчи çула темиçе метр тăршшĕ çеç туса çитерейменсем те автомашинăсемпе е лавсемпе йĕркеллĕ çÿреме май çук. Унта ытларах! талăкшăн туса çитермен çул тăрăх çÿреме тытăнсан вăл хăвăрт пăсăлать, ăна кайран юсама йывăр пулать. Çавăнпа ăнтĕ тÿрĕ ĕçлекен колхозникéсене уйрăм колхозсем юсса пыни, хăйсен тивĕçне пурнăçламанни хытă кÿрентерет.

Ку районта паха çулсем тума условисем лайăх: чул, хăйăр нумай. Материалсем çул хĕрне канĕр мар, турттарма çывăх—5—8 километртан инçе мар. Чылай колхозсен автомашина пур. Кунсăр пуçне предприятисемпе учреждениесен вуншар автомашинине материалсем турттарма хутшăнтармалла. Çав паха майсемпе пурне те тĕрĕс усă курсан, район кăçалхи плана тултарма çеç мар, чылай ирттерсе тултарма та пултарать.

Хĕллехи вăхăтра районти колхозсем чулпа хăйăр пĕр кубометр та турттарса килмерĕн. Çавăнпа çулсене тырпул пухса кĕртме тытăниччен юсаса пĕтерес тесен кашни кунпа лайăх усă курма тăрăшас пулать. Иртнĕ икĕ эрнере районта питĕ сахал ĕç тунă. Чылай колхозсем ĕçе пачах тытăнман. Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ йышăннă тăрăх, ку районтан куллен 534 çын, çуран, 231 çын лавпа ĕçлемелле. Иртнĕ икĕ эрнере вăтам шутпа 179 çын çуран, 53 çын лавпа ĕçленĕ. Нумай колхозсем автомашинăсемпе материал турттармаççĕ.

Хĕллехи вăхăтра Етĕрнери çу завочĕпе спирт завочĕ чĕртаварпа вутă автомашинăсемпе кÿрсе килеççĕ, хатĕр продукцие те çав транспортпа ăсатаççĕ. Етĕрнепе Сĕмĕрле хушшинчи çул çине чул сарса çитерейменнипе автомашинăсем таттисыпнисĕр çÿреймеççĕ. Асăннă предприятисен директорĕсем В. Смоленцевпа И. Васильевко юлташсем çулсем юсаххи çинчен Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ не сахал мар çырусем çыраççĕ. Эпир ăна хирĕç мар, çитменлĕхсене критиклеме кирлĕ. Анчах колхозниксем çул çинче массăллă ĕçленĕ чухне Б. Смоленцевпа И. Васильевко юлташсем хăйсен государство умĕнчи тивĕçне мĕнле пурнăçланине ярăскĕрех ас илес килет.

СССР Министрĕсен Совечĕ 1948 çулхи апрелĕн 19-мĕшĕнче йышăннă тăрăх, предприятисемпе учреждениесен автомашинисем çул строительствинче çулталăкра тăватшар кун ĕçлемелле. Çавăншăн предприятисемпе учреждениесене çул-йĕр органĕсем тÿлеççĕ. Çав постановление çу завочĕпе спирт завочĕн руководителĕсем çулсерен пурнăçламаççĕ, кăçал та ĕçе хутшăнмаççĕ.

Калининопа Етĕрне хушшинчи çул тăрăх автомашинăсемпе лавсем куллен нумай çÿреççĕ. Уйрăмах государствăна тырпул тата пахча çимĕç пама чухне çул çÿрекенсен йышĕ ÿсет. Советски районĕнчи колхозниксен хăйсен тивĕçне пурнăçланă: район территорийĕнчи çул çине чул сарса тухнă. Етĕрне районĕн территорийĕнче пилĕк километр тăршшĕ çул çине чул сарсан автомашинăсен таттисыпнисĕр çÿренĕ пулĕччĕ. Етĕрне районĕнчи колхозсем çул-йĕр пайĕ çулсерен çак ĕçе тума палăртаççĕ, анчах пĕрмаях пурнăçламаççĕ. Кăçал та кунта ĕç япăх пырать. Ку çула вăхăтра тата лайăх юсамалла пулнă кĕркунне пысăк чăрмавсем пулма пултараççĕ.

Етĕрнепе Сурск хушшинче чул сарнă икĕ километр тăршшĕ çула юсамалла. Материалсем çуккипе çул-йĕр участокĕ организацийĕ мостовщиксен бригади ĕçе пуçăма пултараймасть. Районта кĕперсене юсас ĕç те вăраха кайнă. Çул-йĕр пайĕ кăçал пурĕ те пĕр пĕчĕк кĕпере çеç юсаттарнă. Çĕр чавса купалас ĕç те йĕркелемен.

Асăннă çитменлĕхсем пуринчен ытла çул-йĕр пайĕн заведующийĕ М. Лашевский юлташ пуçарулăх пулманнинчен, государство заданине пурнăçламаншăн тивĕçлĕ ответлăх туйманнинчен килет. Ялан ĕçлекен çул-йĕр бригади 10 колхозра çеç организациленĕ. Чылай бригадăсенче инструментсем тата ытти ĕç хатĕрĕсем çитмеççĕ. Плана срокчен тултарассишĕн, пурĕçе те пысăк пахалăхпа тăвассишĕн ял Совечĕсем, колхозсем тата бригадăсем хушшинче социализмла ăмăрту организациленмен. Çул-йĕр работникĕсем малта пыракан бригадăсен тата колхозниксен паха опычĕпе меслетне пĕтĕçтерсе сармаççĕ, бригадирсене тивĕçлĕ пулăшу памаççĕ. Лашевский юлташăн тата ытти çул-йĕр работникĕсен хăйсен ответлăхне тата пуçарулăхне ÿстермелле, колхозсене ытларах пулăшмалла.

Тепĕр пысăк çитменлĕх вăл—культура-массăллă ĕçе йĕркелемени. Колхозниксем нумайăшĕ кашнă вăхăтра çĕнĕ хаçат-журналсем вулаймаççĕ, кинокартинăсем курайманççĕ, вĕсем патне докладчиксемпе лекторсем пымаççĕ.

Нумаях пулмасть Етĕрне райсовечĕн сессийĕ çул-йĕр строительстви енĕпе пакра решени йышăннă. Çав решение çул-йĕр пайĕ тата райисполком пурнăçламаççĕ.

Çул çинче ĕçлемелли паха кунсем иртеççĕ. Часах колхозсем утă çулма тытăнма пултараççĕ. Асăннă çитменлĕхсене халех пĕтермесен, кашни колхоза ĕçе хутшăнтармасан, Етĕрне районĕ кăçал та çул-йĕр строительстви енĕпе кая юлма пултарать.

С. СЕРГАДЕЕВ,
Çул-йĕрпе транспорт хуçалăхĕн управленийĕн главнăй инженерĕ.

Якимова письмоносец пек ĕçлемелле

СĔНТĔР. Мăн Сĕнтĕрте письмоносец пулса 10 çул ытла ĕнтĕ Вера Ивановна Якимова ĕçлет. Вăл кăçалхи иккĕмĕш çур çулшăн «Коммунизм ялавĕ» 39 экземпляр, «Советская Чувашия» 56 экземпляр, районти «Ĕç ялавĕ» хаçата 144 экземпляр çырăнтарчĕ. Кунсăр пуçне Мускавра тухса тăракан хаçат-журналсене чылай çырăнтарнă. Халĕ Мăн Сĕнтĕрте кашни киле 1 хаçат ытларах тивет.

Якимова юлташ хаçат-журнал сарас ĕçе общественнăй уполномоченнăйсене те активлă хутшăнтарать. МТС-ри общественнăй уполномоченнăйсем Р. Саптеевăпа И. Карабаев юлташсем тăрăшса ĕçленине пĕтĕм работниксенчен 80—90 проценчĕ иккĕмĕш çур çулшăн тĕрлĕ хаçат-журнал çырăнса илчĕç.

Мускакассинчи çыхăну агентствинчи (начальникĕ Р. Кожелеев юлташ) письмоносецсем «Коммунизм ялавĕ» хаçата 18 экземпляр çырăнтарнă.

Савах та, пĕтĕмĕшпе илсен, районта хаçат-журнал сарас ĕçе тивĕçлипе хаклама çĕ-ха. Ильинкăри çыхăну агентстине (начальникĕ Е. Яркина юлташ) 4 колхоз, 2 ял Совечĕ, канмалли çурт, Чăваш АССР Сывлăх министерствин санаторийĕ, Сĕнтĕрпе Парат вăрманпромхозĕсем, Ильинка лесничестви, районти апат-çимĕç комбиначĕ, пристань, Ильинкăрипе Вăрманкасси́нчи 7 çул вĕренмелли шкулсем кĕреççĕ. Çапла пулин те кунта иккĕмĕш çур çулшăн «Коммунизм ялавĕ» хаçата питех те сахал çырăнтарнă.

Районти хăшпĕр колхоз руководителĕсем те колхозсем валли иккĕмĕш çур çулшăн центрта тата республикăра тухса тăракан хаçат-журналсене çырăнса илмен-ха. Çак енĕпе «Ленинский путь», «Броневик», «Ударник», Сталин ячĕпе, Мичурин ячĕпе, Свердлов ячĕпе тăракан колхозсене илсе кăтартма пулать.

Халăх хушшине хаçат-журнал сарасси пысăк ĕç пулса тăрать. Çак ĕçе парти, комсомол тата профсоюз организацийĕсен куллен ертсе пымалла.

М. ИСАЕВ.

Тавар илекенсен конференцийĕ

Июнĕн 15-мĕшĕнче Ростекстильшвейторгăн Шупашкарти 71-мĕш номерлĕ магазинĕнче тавар илекенсен конференцийĕ пулса иртрĕ.

Ку магазина 1952 çулхи декабрь уйăхĕнче уçнă. Магазин коллективĕ тавар çавраăн планне уйăхран уйăха ирттерсе тултарса пырать. Пилĕк уйăх хушшинче ĕçчинниксене 5 миллион та 800 пин тенкĕлĕх тавар сутнă. Магазинти кашни уйăрмра ыйтусемпе сĕнÿсен кĕнекисем пур. Çав кĕнекесем çине çырнă сĕнÿсемпе каланисене шута илсе, магазина кашни пилĕк кунта канашлу ирттереççĕ.

Магазин ĕçĕнче çитменлĕхсем те нумай-ха. Унта 5—8 çула çитнĕ ачасем валли кĕпе-тумтир сайра хутра çеç пулать.

Конференцире тавар илекенсем нумай тухса калаçрĕç.

— Продавщицăсен тавар илекенсен ыйтăвĕсене тĕплĕн шута илсе пымалла, вĕсене тивĕçтерме тăрăшмалла, — терĕ Скальдин юлташ. — Магазина çуллахи костюмсем çук, костюм çĕлетме материалсем пулмасçĕ. Плащсен питĕ сахал илсе килеççĕ.

Хăшпĕр чухне магазинта ĕçлекенсем базăсенчен япăх таварсем йышăнаççĕ.

— Нумаях пулмасть çак магазинта кофта туянтăм,— терĕ Соловьева юлташ.— Киле çитсен кофта çурăм енчен çупа вараланни палăрчĕ. Магазина кайса кофтăна улăштартăм. Анчах манăн савăнăç кăлăхах пулчĕ: ку кофти те ырă сăр. Тÿмисене тĕрĕс мар çĕлесе лартнă.

Магазин работникĕсен çак çитменлĕхе тавара сутма йышăниччен курмалла пулнă ĕнтĕ.

Васильев юлташ хулари магазинсенче 8-мĕш номерлĕ калуш тупайманни, базăра вара çав номерлĕ калушсем купаланса выртни çинчен каларĕ.

Богданович тата ытти юлташсем Шупашкарти Ленин ячĕпе тăракан фабрикăра костюмсемпе кĕпесене лайăх çĕлеменнине, фабрикăра ача кĕпе-тумтирĕсене çĕлеме пăрахнине палăртрĕç. Конференцире асăннă фабрикăри техникăлла контроль пайĕн начальникĕ Горбунова юлташ тухса каларĕ. Вăл тавар илекенсен критикăне калани, шута илесшĕн пулмарĕ, хăйĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене тĕрлĕ сăлтавсемпе сирсе яма тăрăшрĕ.

Конференцире пулнисем магазин ĕçне лайăхлатма сĕнÿсем пачĕç.

А. ЖИРНОВ.

Лайăх ĕçлекен магазинсем

КУСЛАВККА. Ĕççыннисен пурнăçĕ лайăханнă май, вĕсем тавар туянасси çултан-çул ÿссе пырать. Сакна Чăвашторгăн Куславкка уйрăмĕн ĕçĕнчен те курма пулать. Унăн магазинĕсемпе ларекĕсене кăçалхи 5 уйăх хушшинче, пĕлтĕрхи çав тапхăрпа танлаштарсан, 465 пин тенкĕлĕх тавар нумайрах сутнă. Чăваштогр уйрăмĕ май уйăхĕнчи тавар çавраăн планне 128 процент тултарнă.

Халăха куллен кирлĕ çĕнĕрен те çĕнĕ таварсем килсе тăраççĕ. Хуçалăх магазинĕсем кил-çуртра куллен тыткаламалли япаласемпе пуянланчĕç.

Май уйăхĕнче уйрăмах 1-мĕш, 10-мĕш, 12-мĕш тата 13-мĕш магазинсем тавар нумай сутрĕç. Пĕрремĕш номерлĕ магазинта продавец пулса С. Рахматуллин юлташ ĕçлет. Суту-илÿ системинче 30 çул хушши лайăх ĕçленĕшĕн ăна РСФСР Суту-илÿ министерствин Хисеп грамотипе наградăланă. Çакăн пек грамота илме унăн ученици А. Иванова юлташ та тивĕçлĕ пулнă. Вăл ĕçлекен магазин иртнĕ уйăхри тавар çавраăн планне 185 процент тултарнă.

Переведенцевăпа З. Мошкова продавщицăсем те ĕççыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ.

(Хамăр корр.).

Заемран пысăк тупăш

Государство заемĕсен облигацийĕсене илсе ĕççыннисен çулсеренех пысăк тупăш кураççĕ. Кăçалхи пилĕк уйăх хушшинче республикăри перекет кассисем халăха 12.738 пин тенкĕ выляв укçи тÿленĕ. Вăл шутра Шупашкар хулинчи ĕççыннисен 2.412 пин тенкĕ, Канаш хулинче—823 пин тенкĕ выляв укçи илнĕ.

Н. ЯСНОПОЛЬСКИЙ.

ЮРĂ ПРАÇНИКĔ

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Кÿкеçре пулнă юрă праçникĕнче. «Паха тĕрĕ» артельте ĕçлекенсем пĕрлешÿллĕ хорта. Сылтăмра— баянист А. Романов.

П. ЕФРЕМОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Колхозлă ял ĕçченĕсен уявĕ

Кашни халăхăн хăйĕн ялан лайăхла йăлана кĕрсе юлнă праçник пур. Чăваш халăхĕн пĕр праçникĕ вăл — акатуй. Ĕççыннисем кунта, акса-суха ĕçне вĕçленĕ хыççăн, кăмăл туличчен савăннине пĕрлех, колхозри общественнăй хуçалăх çитĕнĕвĕсемпе паллашаççĕ, халăх культури ÿсĕнине тата физкультурăпа спорт аталаннине кăтартаççĕ.

Хĕвел чылай çÿле хăпарнă ĕнтĕ. Катари пысăк уçланкăра халăх туллиех. Кашнин сăн-питĕнче тулли савăнăç çиçет. Пывăç çине лартнă репродуктор часах митинг пуçланасси çинчен пĕлтерет.

Райсовет исполкомĕн председателĕ А. Семенов юлташ юрă праçникĕ ячĕпе пулакан митинг уçăни çинчен пĕлтерет, КПСС райкомĕн секретарьне Зайцев юлташа сăмах парать.

— Шупашкар районĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем, — тет Зайцев юлташ,—кăçалхи çуракие ĕçсене ăнăçлă тума ирттерчĕç. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсемпе пыракан социализмла ăмăртура пĕрремĕш вырăна тухрĕç. Молотов ячĕпе, Жданов ячĕпе тăракан, «1-ое Мая», «Гвардеец», Сталин ячĕпе тăракан, «Серп и молот» колхозсем районти Хисеп хăми çине кĕме тивĕçлĕ пулчĕç.

Вăл районти колхозсен тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх шучĕпе унăн тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе юлашки çулсенче тунă çитĕнÿсем çинчен пĕлтерет.

Ун хыççăн Сĕнтĕрвăрри райсовет исполкомĕн председателĕ Чумакова юлташ ĕççыннисене районти колхозниксемпе колхозницăсен ячĕпе саламлать.

Юлашкинчен çуракине мала тухнă Молотов ячĕпе тăракан колхозра трактор бригадине куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавсем параççĕ.

Митинг хыççăн пурте уçланкăри сцена патне васкаççĕ. Кунта колхозсемпе шкулсенчи тата «Паха тĕрĕ» артельти коллективсен пĕрлешÿллĕ хорĕ юрă праçникне уçсе концерт парать.

Пĕрлештернĕ хор умне хура çÿçлĕ, яштака пÿллĕ çын тухса тăрать. Вăл—Толик Хураскинсен вăтам шкулта ĕçлекен Александр Леонтьевич Иванов. Дирижер катартнипе хор Совет Союзĕн Гимне пĕр çын пек харăс юрлаас карать. «Пире Сталин ырлăх пачĕ», «Волго-Дон», «Сталинград», «Пирĕн юрă янратăр ялан» юрăсем кăмăла каймалла, илемлĕн янăраççĕ. Хорпа пĕрле уява пухăннă пĕтĕм халăх Сталин пирĕн ырлăх çинчен юрлать.

Пĕрлешÿллĕ хор юрланине итленĕ хыççăн çынсем ушкăнăн-ушкăнăн пысăк уçланкăна тухаççĕ. Кунта курмалли татах та нумай-ха.

Эстрада çинче — художественнăй пултарулăх кружокĕсен членĕсем. Акă Саракассинчи клуб çумĕнчи хор вырăс тата чăваш композиторĕсен юррисене чуна çĕклентермелле юрлать. Юрăсем хыççăн ташлакансем тухаççĕ. Çак ялти шкул учителĕ С. Семенов чăваш халăх ташшине калама çук ăста ташласа пачĕ. Вăлах С. Михалковăн «Рубль и Доллар» юптарăвне пысăк туйăмпа вуларĕ.

Илемлĕ те усă сасăллă Г. Ползункова юрланине Кÿкеçре пуранăкансем пĕрре мар итленĕ. Паян вара вăл юрланисене нихçанхи пек мар хаваллăхса йышăнчĕç. Заводски ял Советĕнчи вулав çурчĕн заведующийĕпе А. Берендеевпа иккĕшĕ «Пшеница золотая» юрра юрланă чухне итлекенсем вĕсен пултарулăхĕпе тĕлĕнмен пек савăнса киленчĕç. Ахальтен мар ĕнтĕ Г. Ползункова юрă праçникне ирттерекен комиссин премине илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Машина-трактор станцийĕ хăйĕн çĕнĕ машинисен выставкине йĕркеленĕ.

— Мĕн чĕмери ку?—ыйтать чылай çулсенчи ватă çын пĕр машина урлинчен кукăр туйипе тĕртсе.

— Чĕмере мар, асатте, çĕрулми лартмалли «СК-2» маркăллă машина вăл, — тет çамрăксенчен пĕри.

— Ку вара — çĕрулми кăлармалли «ТЭК-2» машина, — ăнлантарма васкарĕ тепри. Унтан юнашар ларакан «У-2» трактор çине пурнине кăтартрĕ те хушса хучĕ:—Çавăнтан кăкарса ар та чĕлĕм туртса яриччен пахчари çĕрулмине пĕтĕмпех кăларса пĕтерĕн.

— Тĕлĕнмелле, — тет мучи савăнăçлăн кулса.

Мучине килĕшмесĕр тăма çук. Тĕлĕнмелле хăвăрт пуянланать пирĕн çĕршыв ялхуçалăх машинисемпе. Иртнĕ çул машина-трактор станцийĕ акатуйне самоходнăй комбайн илсе тухнăччĕ те, колхозниксем тĕлĕнсе тăчĕç:

— Вăт ку техника! Хăех çÿрет, хĕх вырать, çапать тата тасатать!

Çак комбайн халĕ те кунта пур-ха, анчах вăл колхозниксемшĕн тĕлĕнтермĕш япала мар. Вĕсем паян иртнĕ çул журналсенче çеç курнă машинăсемпе кускерĕн паллашаççĕ, механизаторсенчен вĕсем мĕнле ĕçлени çинчен ыйтса пĕлеççĕ. Часах çак машинăсем колхоз уй-хирĕсенче ĕçлеме пуçлĕç. Ситес çул—машинатрактор станцийĕ акатуйне çĕнĕ машинăсем татах та пуянланĕ.

Ипподрома та халăх нумай пулчĕ. Кунта ăратлă лашасене çăмăл кÿлсе чуптарса мала тухас тĕлĕшпе ăмăртусем пулчĕç.

Стадиона физкультурниксем хăвăрт чупса, йывăр çĕклесе, волейболла тата футболла выляса мала тухассишĕн ăмăртрĕç. Кÿкеç поселокĕн сборнăй команди волейболла лайăх выляние палăртмалла. Икĕ пăтлă кире пукане йăтас тĕлĕшпе И. Никитин учителе никам та çитеймерĕ. Вăл ăна çуллса хĕрĕх хут çĕклерĕ.

Çапла иртрĕ Кÿкеçри акатуй — юрă праçникĕ. Ку вăл колхозла хуçалăх ÿсĕмĕсемпе çамрăк талантсен пултарулăхĕн тата физкультурăпа спорт ĕçĕнчи ÿсĕмсен чăн-чăн смотрĕ пулчĕ.

Г. КУЗЬМИН.

АСЛĂ ГУМАНИСТ

Пролетариатăн аслă писателĕ, вăрçă чун-чĕреллĕ гуманист Алексей Максимович Горький мĕн ĕмĕрĕ иртиччен çынна юратнă, унăн ырлăхĕпе телейĕшĕн ырми-канми ĕçлесе, кĕрешсе пурăннă.

Пуçмăрçăсене çĕнтерĕ пролетариатăн çĕнĕ гуманизмĕ, çынна çын юратасси, çенĕ вăл, халĕ ĕнтĕ этемлĕх историйĕнче творчестволла вăй пулса тăрать, çав гуманизм çынсене асаплăхпа пусмăрлăхран хăтарать, пĕтĕм этемлĕхе тивĕçекен социализм культурине тума пулăшать, ĕçхалăх хушшинче пĕтĕм тĕнчипех тăванлăхпа туслăх никĕсне хывма май парать.

Пролетариат гуманизмĕ вăл ирĕклĕхе телейлĕхшĕн, çынсен хушшинчи пĕртанлăхшăн, çĕнĕ общественнăй кĕрешни пусмăрлăхсене аркатса, çĕмĕрсе пынă пулса тăрать. Горький çĕнĕ пурнăçшăн, çĕнĕ йĕркешĕн пĕтĕм хăватлă талантне кĕрешнĕ. Вăл Российри пролетариат капитализмпа патша влаçне хирĕç çĕклене-нĕ çулсенче писатель пулса çитĕннĕ, хăйĕн революцилле творчествипе ĕçхалăха революцие пĕр хурçă чăмăр пулса тăма пулăшнă. Чăн-чăн художник, чăн-чăн реалист Горький «Кăткă пек кĕвĕшекен, асран кайса мулшăн çăткăнланакан лавкка хуçисене» кăтартса панă. Вĕсене истори урапи таптаса каясçине, вĕсен пĕтесси «истори чи пысăк тĕрĕслĕх пулнине» вăл витĕр курса тăнă.

Аслă Горькин чаплă произведенийĕсенче эпир буржуазипа тĕнчен çыннисене—чее те сĕмсĕр, çăткăн та икĕ питлĕ харампырсене, ултавçăсене, ясăкчăсене, йĕркесĕр мещенсене, пушă кăмăллă фома интеллигентсене лайăх куратпăр. «Фома Гордеевпа» «Артамоновсен ĕçĕ» романсенче, «Егор Булычевпа тата ыттисем» ятлă пьесăра Горький буржуазипа тĕнче пĕтессине, пролетариат ĕçĕ çĕнтерессине калама çук ĕненмелле, кĕскелле чуна витмелле кăтарса панă. Çак произведенисенче писатель малтан пуçласа вĕçне çитиччен купцасемпе фабрикантсем ыча пуçĕ пулса тăма пултараймани çинчен, усламçăсемпе пусмăрçăсен кун-çулĕ вилĕм шăтăкĕ умĕнче тăни çинчен, кинĕ пурнăç вырăнне çĕнĕ те телейлĕ, ирĕк те сутă пурнăç килесси çинчен калаcа парать.

Вырăссен пĕрремĕш революцийĕ хыççăн Горький Хĕвеланăç Европăри çĕршывсенче тата Америкăра пулса курать, буржуазла культурăпа, суя «демократипе» паллашать. Писатель капитализма çĕршывсенче чуханлăх, мĕскĕнлĕх курать. Чуханлăхпа мĕскĕнлĕх вăл унти ĕççыннисен шăпи. Çакăн çинчен Горький акă мĕн çырать: выçă çынсен куçĕсем чурасен куçĕсем пек салхун та тĕксĕмĕн пăхаççĕ, çак вăхăтрах вĕсем хаяр тавăру вучĕпе те алкăшаççĕ. Нумай куртăм эп мĕскĕн çынсене, анчах та Ист-Сайдри (Нью-Йоркри рабочисем пурăнакан район.—К. Н.) чухăнсем чун-чĕрене çÿçентерсе ярать, ун пеккине эп нихçта та курман. Писатель çакна сăнанă: пĕрисем—пуяннисем—ырă курса, ахаасса пураннаççĕ, теприсем—нуйлаймасем, чуханнисем—тертленсе, асап курса пурăнаççĕ. Çынна çын унта—капкăр. Çынна унта ылтăн пулсан çеç çын вырăнне хураççĕ. Çакна Горький хăйĕн «Сарă Шуйттан хули» тата «Республика королĕсенчен пĕри» ятлă памфлечĕсенче вăйлăн кăтартса панă.

Горький хăйĕн произведенийĕсенче истори хуçисене—революциллĕ рабочисене кăтартса панă. Вĕсен—«Мещенсем» пьесăри Нил машинист, «Тăшмансем» пьесăри рабочисем тата «Амăшĕ» ятлă романри Павел Власовпа унăн юлташĕсем, «Амăшĕ» романра Горький революциллĕ пролетариат социализмшăн кĕрешнине, рабочисен ĕçшĕн пĕтĕм чун-чĕререн тăрăшнă çĕнĕ-çын çитĕнсе ÿссе пынине кăтартса панă.

Горький творчестви шухăш тĕлĕнмелчен питĕ пуян. Писатель пурнăçа, пысăк саспалли сыраакан çынна юратма чĕнсе, этемлĕх çутă пуласлăхĕшĕн кĕрешме вĕрентет. Çак шухăша Горький «Хĕрпе вилĕм» ятлă сăвăллă халлапра уйрăммăнах таран кăтартса панă. Çакă тĕлĕнмелле чаплă произведенин пĕр экземплярĕ çине Сталин юлташ акă мĕн çырса хунă: «Ку япала Гете «Фаусчĕнчен» те вăйлăрах (юрату вилĕме çĕнтерет)».

Горький пролетариатла гуманизм çинчен вĕрентнине çес çырлахман, вăл çав гуманизма пурнăçа кĕртессишĕн, унпала çĕнĕ общество тунă çĕрте усă курассишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçленĕ. Горький хăйĕн ĕмĕчĕсем пурнăçланса пынине хăй куçĕпе хăй курнă, мĕншĕн тесен пирĕн çамана çыннăн тăрăшасси, унăн ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртессипе пĕрех, Совет правительстви куллен ĕçĕ пулса тăрать. Коммунистсен партийĕ ĕçне пынипе тата калама çук пысăк çитĕнÿсемпе хавхаланса, Горький совет çыннисене чăн-чăн патриотла туйăмпа çапла калать: «Хамăрăн иккĕмĕш аннене—Тăван çĕршыва пĕтĕм чунтан юратăр!»

А. М. Горький çамрăк литераторсен йышне вĕрентсе ÿстерес тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçленĕ, вĕсене социализмла реализмăн тĕрĕс çулне кăтартса панă. Горький публицистикăлла произведенисен нумай çырнă, вĕсем урлă вăл совет çыннисене Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, халăх телейĕшĕн хастарлăн кĕрешме чĕннĕ. Аслă писатель çавăн пекех совет çыннисене тимлĕ пулма, тăшмана курайма тăма, ăна тăрă шыв çине кăларса пыма вĕрентнĕ. «Клим Самгин» ятлă романта, «Достигаевпа ыттисем», «Сомова ыттисем» ятлă пьесисем те тимлĕ пулма, тăшмана витĕр курса тăма вĕрентеççĕ. Пролетарилле гуманизмăн принципĕ вăл Тăван çĕршыва тăшмансем тапăнасран пек хĕтĕлени, миллионла массăсен интересне сыхлани пулса тăрать. Çавăнпа та Горький: «Тăшман парăнмасть пулсан, ăна пĕтерсĕ тăкаççĕ»,—тенĕ.

Алексей Максимович Горький халăхсен хушшинчи туслăхшăн, никам аркатайми çирĕп миршĕн яланах хĕвăнма пĕлмесĕр кĕрешнĕ, тĕнчери ĕççыннисене вăл империализмпа çапăçма чĕннĕ. Вăл империалистсем пуçарса ярасшăн вăрçă хăрушлăх. Çак çĕнĕ хĕрамсене, ача çине сене чĕнсе вăл çапла каланă: «Хăвăр ачăра эсир кайăк сĕчĕпе ÿстеретĕр. Анă, аллинчен çавăтса, пурнăçа, истории илсе кĕретĕр, этемлĕх ырлăхĕшĕн кĕрешме хастар та паттăр, аслă та сутă ĕмĕтшухăшлă пулма вĕрентетĕр... Хĕрарăмсем! Ача амăшĕсем! Законсем кăларманăн правасем сирĕн алăра. Эсир—пурнăç çуратакансем, эсир пурнăç вилĕмрен хÿтĕлеме пурте пĕр çын пек çĕкленмелле. Эсир мĕн ĕмĕртеннех вилĕме курăймастăр. Эсир вăйăма пĕлмесĕр кĕрешме, çĕнтерме пултаракан вăй пулса тăратăр».

Горький сырнă «Культура мастерĕсем, эсир кам майлă?», «Вăрçа хирĕç кĕрешекенсен Амстердамри конгресне», «Культурăна хÿтĕлекенсен конгрессне» тата ытти чаплă статьясем те паянхи кун та мирпе демократишĕн кĕрешекен çĕршер миллион çынсен аллинче хăватлă хĕçпăшал пулса тăраççĕ. Горький хăйĕн ытти произведенийĕсенче те тĕнчери ĕççыннисене революциллĕ кĕрешÿре туслашма, пусмăрçăсене хирĕç кĕрешме чĕннĕ. Аслă писатель ячĕ ĕççыннисемшĕн революциллĕ ялав пулса тăнă.

Июнĕн 18-мĕшĕнче Алексей Максимович Горький вилнĕренпе вунçичĕ çул тултарчĕ. Аслă писателе Тăван çĕршывăн ытлашшиăнсем—империалистсене сутăннă ирсĕрсем вĕлернĕ. Анчах та Горький пурнăçĕ, вăл пĕтĕм ĕçĕ чунчĕрипе малашне те ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнĕ.

Аслă гуманистăн пархатарлă традицийĕсене пурнăçласа, совет писателĕсем çĕнĕрен те çĕнĕ, чаплă произведенисем çыраççĕ. Çав произведенисем совет çыннисене хамăрăн Тăван çĕршыва тата вăйлăрах чечеклентерме, этемлĕх телейĕшĕн кĕрешме чĕнеççĕ. Генийлĕ писатель кĕнекисем социализма Отечественнăй Коммунистсен партийĕн ĕçне чун-чĕререн парăннă совет патриочĕсене воспитани панă, вĕсем халĕ те воспитани парса тăраççĕ.

Горький—пирĕнпех! Вăл пĕтĕм тĕнчери миршĕн, демократишĕн, социализмшăн кĕрешекен халăх хушшинче пурăнать.

К. НИКОЛЬСКИЙ.

Пирĕн юрă янратăр ялан

Вăрнар çывăхĕнчи вăрманти илемлĕ уçланкă. Кунта ятарласа эстрада тунă, инçетренех карусель куранать. Уçланкă тавра суту-илÿ палаткисем. Пур çĕрте те ялавсем. Хĕрлĕ пусма çине çырнă лозунгсем кунта юрă праçникĕ пуласси çинчен пĕлтереççĕ.

Ирхине, ултă сехет те çитмен-ха. Çак уçланка патнелле капăр тумланнă çынсем çуран, лашасемпе, велосипедсемпе, мотоциклсемпе, автомашинăсемпе килме пуçларĕç. Вунă сехет тĕлнелле аслă уçланкă халăхпа тулчĕ. Пурте эстрада çывăхне туртăнаççĕ. Часах кунта районти юрă праçникне килнĕ хор, музыка, хореографи коллективĕсемпе уйрăм исполнительсен хăйсен творчествине кăтартма пуçламалла.

Ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕн председателĕ, Совет Союзĕн Геройĕ А. Иванов кĕске сăмах каласа юрă праçникне уçать. Ун хыççăн КПСС райкомĕн секретарĕ И. Александров юлташ район кăçалхи çуракине ăнăçлă ирттерчĕ, колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса ĕçлени çинчен, халĕ ĕнтĕ савăнăçлă праçник ирттерни çинчен сăмах калать.

Эстрада çине районти 250 çынтан тăракан пĕрлешÿллĕ хор вырнаçнă. Хора Мария Ластухина комсомолка ертсе пырать. Малтанах пĕрлешÿллĕ хор, пĕр çын пек, чаплă май, Совет Союзĕн Гимнне юрлать. Унтан Сталинла преми лауреачĕ Ф. Лукинăн «Пире Сталин ырлăх пачĕ», Г. Хирбюн «Пирĕн юрă янратăр ялан» юррисене юрласа парать.

Районти пĕрлешÿллĕ хор хыççăн эстрада çине заводри Ю. Цесельский ертсе пыракан 63 çынтан тăракан хор тухать. Хорта юрлаканкен пурте пĕр пек тумланнă. Коллективра лайăх юрлама заводăн духовой оркестрĕ пулăшать. Ку коллективăн программинче Захаров композиторăн «Слава Советской державе», Новиковăн «По плану все решается», Фрадкинăн «Песня о Днепре», Ф. Лукинăн «Пире Сталин ырлăх пачĕ» юррисемпе частушкăсем. Хора юрă праçникне курма килнĕ çынсем ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç.

Эстрада çине Пăртасри Калинин ячĕпе тăракан колхоз хорĕ тухать. Вăл чăваш композиторĕсен юррисене питĕ ăста юрласа пачĕ. Пурнăçĕн пĕрисен Кривоносов композиторăн «Колхозниксен хорĕ», Ф. Лукинăн «Çамрăксен юрри», Г. Лебедевăн «Савнисăм» юррисем лайăх шăранаççĕ.

Уйрăм исполнительсенчен 14 çулхи Алексей Министров чăваш ташшине ăста ташласа панине палăртмалла.

Жданов ячĕпе тăракан колхозри 70 çулхи В. Яковлев чăвашсен авалхи музыка инструменчĕпе—шăпăрпа тапнă кĕвĕсене шăрантарни куракансене питех те килĕшрĕ.

Спорт площадкинче тĕрлĕрен вăййисем пулчĕç. Куракансене футбол, волейбол вăййисем, велосипедистсен ăмăртăвĕ интереслентерет.

Юрă праçникне курма 20 пин çын ытла пухăнчĕ. Праçник кăçаннех пулчĕ.

Н. АМУРЦЕВ.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ

БУДАПЕШТ, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Будапештра Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ уçăлнă.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Бюро членĕ Эммануэль д'Астье де ла Вижери сессие уçнă чухне каланă сăмахра Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн председателĕ Жолио-Кюри чирленĕ пирки Будапешта килме пултарайманни çинчен пĕлтернĕ. Çавăн пекех Итали парламенчĕн суйлавĕ пулнă май сессие Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн вице-председателĕ Пьетро Ненни килсе çитме пултарайман.

Эммануэль д'Астье де ла Вижери каланă тăрăх, Италири суйлавсем тĕнчери лару-тăрăва çĕнĕрен çăмăллатма пултарассĕ.

Кучуххехи тĕнчери лару-тăрăва пăхса тухса, вăл çапла каланă: калаçусем ирттерме кирлине тата май пулнине ăнланса илнĕ мĕнпур çынсене, мĕнпур ушкăнсене миршĕн пыракан кĕрешĕве хутшăнтарма çĕнĕ майсем тупас пулать. Калаçусем ирттерессине хирĕç тăракан вăйсем те пурха. Уйрăм ыйтусем тăрăх калаçусем ирттерни çакăн пек хирĕçусене вăйсăрлатма тата тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатма пулăшать. Пирĕн тĕп задача халиччĕнхи пекех аслă державăсем хушшинче килĕшусем тăвассишĕн кĕрешесси пулать. Анчах эпир çавăн пек килĕшусем тума малтанлăха нимĕнле условисем те кăларса тăратмастпăр. Çак тĕллев патне çитме мирлĕ пур майсем те, кирек мĕнле пуçару та, кирек мĕнле калаçусем те усăллă. Юлашкинчен Эммануэль д'Астье де ла Вижери çакна палăртнă: мир вăйĕсем тунă çĕнтеру çаплах тĕреклĕ мар-ха.

Тĕнчери лару-тăру çăмăлланма пуçлани çинчен калакан тĕслĕхсем çаплах пĕчĕккĕ-ха. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн хальхи сессийĕн задачи мире юрататан вăйсен çак çĕнтерĕвне тата ытларах тĕреклетесси, çĕнĕ çĕнтерусем тăвасси пулать. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатма пулăшакан мĕнпур майсене ырласа йышăнать. Çак тĕллевпе миршĕн кĕрешес ĕçе миллионшар çĕнĕ çынсене хутшăнтарас пулать.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членĕ Го Мо-жо хăйĕн сăмахĕнче тĕнчери кирек мĕнле хирĕçĕве те мирлĕ калаçусем ирттернипе тата пĕр-пĕрипе консультаци тунипе татса пама пулать, тесе каланă. Çак идейăна пĕтĕм тĕнчери миллионшар хĕрарăмсемпе арçынсем ырласа йышăнчĕç ĕнтĕ.

Инçет Хĕвелтухăçĕнче тата пĕтĕм Азире мирпе хăрушсăрлăх туса хурас тесен, тенĕ малалла Го Мо-жо, ытти çĕршывсен шалти ĕçне урăх çĕршывсем хутшăнассине хирĕç тăрса, вăл çĕршывсен никама пăхăнманлăхĕпе суверенитетне хисеплес пулать. Йĕркеллĕ экономикăллă тата культурăллă хутшăнусем тумалла, сутуилĕве вăйлатмалла, çапла вара халăхсен пурнăç шайне лайăхлатма кирлĕ условисем туса хурас пулать.

Аслă державăсем хушшинче калаçусем ирттернипе кăна тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатма тата вăрçă хăрушлăхне сирсе яма пулать.

Малалла Эльфес (Германи), генерал Кавалканти (Бразили), Рене Бовар (Швейцари), Саламеэ (Колумби) тухса каланă.

БУДАПЕШТ, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн паянхи ирхи ларăвне д'Арбусье председатель пулса ертсе пынă. Вăл мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Канада конгресĕн председательне, Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членне джеймс Эндикотт доктора сăмах панă.

Канадăри миршĕн тăракансен задачисем çинчен астутарса, Эндикотт çапла каланă: çак юхăм, чи малтан, пилĕк аслă держава пĕр-пĕрипе калаçса татăлмалла тăвассишĕн тата вĕсем пĕр-пĕрне хирĕç вăрçă вăрçас сукки çинчен савăнăçлăн пĕлтермелле тăвассишĕн кĕрешет.

Эндикотт малалла колониаллă чылай çĕршывсенче вăрçă вăрçни мире хăратса тăни çинчен каланă. Хĕвеланăçĕнчи пропаганда çак вăрçăсем «коммунистсен каварĕнчен» килет, тесе кăтартса пама пăхать. Тĕрĕссипе илсен, çак вăрçăсем вĕсем пăхăнса тăракан çĕршывсем чухăнлăха тата колони режимĕ туса хунă мĕнпур хĕн-хура хирĕç восстание çĕкленни пулса тăрассĕ.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членĕ Боучек (Чехословаки металлургĕ) Чехословаки халăхĕ миршĕн кĕрешни çинчен каланă. Юлашкинчен Боучек миршĕн тăракансен Чехословакири юхăмĕн сĕнĕвĕсем çинчен каласа панă. Вăл сĕнусем çакăн пек: 1) Потсдамра йышăннă килĕшу принципĕсене пĕтĕм Германи территорийĕнче çирĕппĕн тытса пымалла, 2) Германипе мирлĕ договор тăвасси çинчен калаçусем пуçласа ямалла, 3) «Пĕтĕмĕшле договора» тата «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» текен договора сирсе пăрахмалла, мĕншĕн тесен вĕсем агрессилĕ тĕллев тытаççĕ.

Малалла Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Бюро членĕ Риккардо Ломбарди (Итали) сăмах илет. Вăл капитализмла çĕршывсенчи экономикăлла лару-тăру çинчен тата тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатсан суту-илĕве вăйлатма пулни çинчен каласа парать.

Кун хыççăн Хĕвеланăç Германирен Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ членне килнĕ пастор Мартин Нимеллер тухса каланă. Вăл пĕтĕм тĕнчери христиансене мире сыхласа хăварассишĕн тата пĕр-пĕрипе мирлĕ пурăнмалла тăвассишĕн кĕрешме чĕнсе каланă.

Ирхи ларура çавăн пекех тата пастор Рагмар Форбекк (Норвеги) тухса каланă.

БУДАПЕШТ, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн июнĕн 16-мĕшĕнчи каçхи ларăвне Эжени Коттон председатель пулса ертсе пынă. Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн членĕ генерал Эриберто Хара (Мексика) Латинла Америкăри çĕршывсенчи, уйрăммăн илсен, Мексикăри йывăр пурнăç çинчен, çак çĕршывсем Америка монополийĕсенчен хĕн-хур курни çинчен тĕплĕн каласа панă.

«Сивĕ вăрçă» кăларса тăратнă йывăрлăх çинчен каласа, Хара: вăрçă пурпĕрех пулмалла тесе шутланине хирĕç кĕрешмелле, тенĕ. «Сивĕ вăрçă» хĕвелтухăçпе хĕвеланăç хушшинче чикĕ туса хурать, анчах та халăхсен ăна çĕнтерес пулать. Çакăн пек тăвас тесен вĕсен мир çулĕпе пымалла.

Индири наци конгресĕн парти членĕ Чатур Нараин Малавия Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн сессийĕ Корейăра перемири тума май килсе тухнă вăхăтра, СССР, Инди, Китай, Великобритани правительствисем аслă державăсен конференцине ирттерме халăхсем ыйтнине йышăннă вăхăтра пухăннине палăртнă.

Совет Союзĕпе Китай правительствисен инçетрине куракан политики, тенĕ вăл, пĕтĕм тĕнчери халăхсене савăнтарчĕ.

Оратор малалла Кенире шурă ӳтлĕ «господасен» пĕчĕк ушкăнĕ чуралăх чухнехи пек йĕрксем туса хунине палăртнă.

Чатур Нараин Малавия тĕнчери мĕнпур çĕршывсенчи миршĕн кĕрешекенсене, хальхи вăхăтра калаçусем ирттермелле тăвассишĕн кампани пуçланнă май, Азипе Африкăри халăхсене тата ытларах хавхалантарма чĕннĕ.

Илья Эренбург хăйĕн сăмахĕнче миршĕн тăракансен юхăмĕ тунă çитĕнусем çинче чарăнса тăнă. Вăрçăшăн тăракансем, тенĕ Илья Эренбург, хăйсене парăнтарнă тесе шутламаççĕ. Корейăра килĕшу туни вĕсемшĕн пĕрремĕш пысăк ăнăçсăрлăх кăна пулать. Вĕсем çакăншăн ăçта та пулин урăх вырăнта тавăрас шанăçа çухатмаççĕ. Этемлĕхе нумай çулсем хушши ялан хăратса тăнă вăйсем хăйсен шухăшĕсене ансаттăнах пăрахасса шанни айвана ĕç пулнă пулĕччĕ. Вĕсенчен пĕрисене—ытла те вăйăх пулни, теприсене—сехĕрленсе ӳкни, виççĕмĕшсене —пуç пулса тăма ĕмĕтленни иртĕхтерет. Çав чирсенчен сыватма çăмăл мар.

Пĕрисене килĕшу тăвас идея хăратса тăрать пулсан, теприсене прогресс, малашлăх хăратса тăрать. Сеул правителĕсем Корейăра малашне те юн юхтарасшăн хапсăннине эпир хамăр куçпа курса тăратпăр, тенĕ Эренбург. Корейăра перемири тăвасси Ли Сын Мана хăратать пулсан, Германи ыйтăвĕпе аслă державăсем мирлĕ калаçса татăлас идея Аденауэра хăратать. Пирĕн çакăншăн кĕрешес пулать: халăхсем миршĕн тăнине мĕнпур правительствăсем шута илччĕр.

Вăрçă хăрушлăхне, тенĕ малалла Эренбург, аслă державăсем калаçса татăлнипе сирсе яма пулать. Пирĕн тĕллев — Мир Пакчĕ. Анчах та Мир Пакчĕ тăвасси вăл çăмăл ĕç мар. Пирĕн, миршĕн кĕрешекенсен, государствăсен суверенитетне тĕреклетес тата вĕсемшĕн хăрушсăрлăх туса хурас тĕлĕшпе йышăнакан мĕнпур ĕçсене ырлас пулать. Пирĕн пĕтĕм тĕнчери миршĕн пыракан кĕрешӳре хальхи вăхăтра пирĕнпе пĕрле пыман, анчах та вăрçă вăйĕсене хирĕç кĕрешекен мĕнпур çынсене хамăр енне çавăрма тăрăшас пулать.

Мире хӳтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Аргентина комитечĕн секретарĕ Биржан Латинла Америкăри ĕççыннисен йывăр пурнăçĕ çинчен каласа панă.

Польша делегачĕ, Польша сеймĕн вице-маршалĕ Станислав Кульчинский Германи ыйтăвне татса парасси хальхи вăхăтра уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăнине палăртнă. Мĕншĕн тесен, Хĕвеланăç Германире каллех вăрçă вăйĕсене чĕртсе яма тăрăшни курăнать.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн Бюро членĕ Изабелла Блюм (Бельги) çапла каланă: миршĕн кĕрешни, пĕр-пĕрне ăнланни, çавăн пекех тата дипломатилле чылай ĕçсем туса ирттерни кăçалхи çуркунне пĕтĕм этемлĕхшĕн вăхăтлăха шанăç кӳнĕ çуркунне пулса тăчĕ. Çакăн пек ушăнусен ансат пулма пултарнă тесе шутлакан çынсем çинчен каласа, Блюм çакна аса илтернĕ: хальхи вăхăтра килсе тухнă ĕçсем вĕсем Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕ ертсе пынипе миршĕн кĕрешекенсем тăватă çул хушши активлă тăрăшнипе туса хунă ĕçсем пулса тăраççĕ.

Индире миршĕн тăракансен юхăмне ертсе пыракан паллă çын, Инди парламенчĕн членĕ доктор Сингх Сокхэй хăйĕн сăмахĕнче Инди халăхĕ миршĕн кĕрешни çинчен каласа панă.

Юлашкинчен Сокхэй çапла каланă: Инди делегацийĕ ячĕпе эпĕ çак сессин мĕнпур делегачĕсен шухăшĕсене тивĕçтерекен сĕнӳ тăратасшăн. Çак мир хулине пухăннă пирĕн сесси пĕтĕм этемлĕхе ăнланмалла сăмахсемпе калаçусем ирттернипе вăрçа çĕнтермелле тăвассишĕн чĕнсе калатăр, ăна мĕнпур халăхсем йышăнччăр.

Эпир Будапештран пĕтĕм халăхсене чĕнсе каланă сăмахсем çакăн пек пулччăр: паян хирĕçусем кăларса тăратакан мĕнпур ыйтусем тăрăх калаçусем ирттермелле пултăр. Эпир аслă державăсене калаçусем ирттерме чĕнсе каланисенче малтанах кăларса тăратнă условисем пулмалла мар. Ыйтусене йĕркелени мир патне пымалли утăм пулса тăрать.

Д'Астье де ла Вижери Инди делегачĕн сĕнĕвне йышăннă. Вăл çак сĕнусене сессире халех пăхса тухма сĕннĕ.

Пĕтĕм тĕнчери Мир Совечĕн вице-председателĕ Габриэль дъАрбусье (Хура Африка) тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатма пулăшакан сĕнусене йышăнни çинчен пĕлтернĕ.

Юлашкинчен ларура Ливан тата Швеци представителĕсем тухса каланă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче пур фронтсенче те артиллерирен персе тăнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсемпе самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 6 самолетне персе ӳкернĕ, 2 самолетне сиенленĕ.

ПХЕНЬЯН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсемпе самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернĕ, 3 самолетне сиенленĕ.

Корейăра перемири çинчен пыракан калаçусем

ПЕКИН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтернĕ:

Корейăпа Китай делегацийĕ паян çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

Июнĕн 16-мĕшĕнче икĕ енĕн штаб офицерĕсем хăйсен хупă ларăвĕсене ирттернĕ.

Кăнтăрла иртсен çавăн пекех тата икĕ енĕн çыхăну офицерĕсем пĕр-пĕрипе тĕл пулнă.

Июнĕн 17-мĕшĕнче делегацисен пĕрлехи ларăвне ирттерме палăртнă.

ПЕКИН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Корейăпа Китай делегацийĕ паян çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă:

Июнĕн 17-мĕшĕнче икĕ енĕн делегацийĕсем хупă лару ирттернĕ. Лару хыççăн икĕ енĕн штаб офицерĕсемпе çыхăну офицерĕсем хăйсен ĕçне малалла туса пынă.

НЬЮ-ЙОРК, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Пĕрлешнĕ Нацисен тата Корейăпа Китай енĕн представителĕсем перемири çинчен алă пуснă хыççăн Корейăри çарсене уйăрса тăракан лини çинчен тăракан ыйту пирки калаçса татăлнă.

Америка Авиацийĕ Корейăри водохранилищĕсен çине тапăнать

ПХЕНЬЯН, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Америка авиацийĕ Çурçĕр Корейăри водохранилищĕсем çине çаплах тапăнать. Июнĕн 13-мĕшĕнче çĕрле Америка бомбардировщикĕсем Çурçĕр Пхенан провинцийĕнчи Кусон водохранилищи çине тапăннă, бомбăсем нумай пăрахнă. Водохранилище пĕвине чылай ишĕлтернĕ.

Тепĕр кунне Америка бомбардировщикĕсем Кусон водохранилищи çине каллех тапăннă. Çав кунхинех каçхине 46 бомбардировщик асăннă водохранилище çине виççĕмĕш хут тапăннă. Кусон уездĕнчи хресченсен уй-хирĕсене пысăк сиен кӳнĕ.

Июнĕн 13-мĕшĕнче çĕрле Америка бомбардировщикĕсем Тэчхонри водохранилище çине бомбăсем пăрахнă. Водохранилище çине 50 самолет вĕçсе пынă. Пĕве çине 200 яхăн бомба пăрахнă. Шыв тапса тухнипе рис акнă вырăнсене пысăк сиен кӳнĕ. Пĕвене юсама тухнă хресченсем çине Америка бомбардировщикĕсем пулеметсенчен пеме тытăннă. Корейăри тĕп телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка бомбардировщикĕсем юлашки вăхăтра Çурçĕр Корейăра пиллĕкмĕш водохранилище çине тапăнаççĕ ĕнтĕ.

Совет крейсерĕ „Свердлов" Англире пулнă май

ЛОНДОН, июнĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Июнĕн 15-мĕшĕнче, тинĕс-çар парачĕ вĕçленнĕ хыççăн, королева II-мĕш Елизавета парада хутшăннă карапсен командирĕсене йышăннă. Хăнасем хушшинче Совет Союзĕн «Свердлов» крейсерĕн командирĕ пĕррремĕш рангри капитан Рудаков пулнă.

Парад хыççăн совет крейсерĕ патне пассажирсем лартса çӳрекен пăрахутсем, моторлă катерсем, паруслă яхтăсем йышлăн пыма пуçланă. Пассажирсем совет морякĕсене ăшшăн саламланă.

Июнĕн 15-мĕшĕнче «Свердлов» крейсер командирĕ Англипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществи ячĕпе обществăн наци совечĕн председателĕ Джон Плэттс Миллс тата обществăн генеральнăй секретарĕ Этон Слоун алă пусса янă телеграмма илнĕ. Телеграммăра çапла каланă: «Миршĕн тата Совет Союзĕпе туслă пурăнассишĕн тăракан пĕтĕм Англи халăхĕ ячĕпе эпир сире тата сирĕн пĕтĕм экипажа, эсир июнĕн 16-мĕшĕнче çула тухса кайма хатĕрленнĕ май, çул телейлĕ пултăр, тесе ырлăх сунатпăр. Эсир пирĕн çĕршыва килсе кайни пирĕн çĕршывсем хушшинчи туслăха тĕреклетес ĕçре пысăк ĕç пулса тăчĕ. Эпир çакна чĕререн шанса тăратпăр: эсир малашне пирĕн пата тата нумайрах вăхăта хăнара пулма пултарăр».

Польша правительстви Розенбергсене хӳтлĕхе илме килĕшнĕ

ВАРШАВА, июнĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри Хĕрлĕ Хĕресĕн тĕп правленийĕ Польша Халăх Республикин правительствинчен Польша Халăх Республики конституцийĕн 75-мĕш статьи тăрăх Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче вĕлермелле тунă Джулиус Розенбергпа Этель Розенберга (упăшкипе арăмне) Польша хӳтлĕхне илме ыйтнă. Польша Халăх Республикин правительстви Польшăри Хĕрлĕ Хĕрес ыйтăвне тивĕçтерме йышăннă, США правительстви Розенбергсене Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен тухса кайма ирĕк парас пулсан, вĕсене Польша территоринче пурăнма ирĕк пама килĕшнĕ.

Польша правительстви çакăн пек решени йышăннă май, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ С. Скшешевский кăçалхи июнĕн 15-мĕшĕнче Пĕрлешӳллĕ Штатсен Польшăри посолне Джозеф Флэк господина тивĕçлĕ нота панă.

Совет моделисчĕ В. В. Шеремет тунă тĕнчери рекорд

Июнĕн 15-мĕшĕнче Совет Союзĕнчи В. П. Чкалов ячĕпе тăракан Центральнăй аэроклубăн авиаци спорт комиссийĕ Пĕтĕм тĕнчери авиаци федерацийĕнчен ДОСААФ авиамоделисчĕ Владимир Шеремет тĕнчери рекорд тунине çирĕплетни çинчен пĕлтернине илнĕ. Кăçалхи мартăн 11-мĕшĕнче унăн реактивлă двигательпе ĕçлекен автожирĕ пĕр сехет хушшинче 161,5 километр хăвăртлăхпа вĕçнĕ. Ку вăл Пĕтĕм Союзри тата тĕнчери рекорд пулса тăрать. (ТАСС).

Кизел çĕр кăмрăк бассейнĕнчи драма театрĕн артисчĕсем Шупашкарта

Июнĕн 17-мĕшĕнче ирхине Кизел çĕр кăмрăк бассейнĕнчи драма театрĕн артисчĕсем «Н. В. Гоголь» пăрахутпа Шупашкара çитрĕç. Театр коллективне хулари общественность представителĕсем, искусствăпа культура работникĕсем ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç.

Ĕççынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн исполкомĕн председателĕ Н. П. Енчиков юлташ хăнасене саламласа сăмах каларĕ. Вăл хăнасене гастроле лайăх ирттерме ыра сунчĕ. Театр коллективĕнчи паллă артистсенчен пĕри — РСФСР тава тивĕçлĕ артистки А. В. Бронина юлташ ответлă сăмах каларĕ.

Паян академи театрĕнче çак театр коллективĕ А. М. Горький çырнă «Старик» драмăна кăтартать.

„Агитатор блокночĕн" черетлĕ номерĕ

КПСС Чăваш обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ кăларакан «Агитатор блокночĕн» черетлĕ, 12-мĕш номерĕ пичетленсе тухнă.

«Блокнотăн» умстатьинче республикăри колхозсемпе МТС-сен тырпул пухса кĕртме хатĕрленес ĕçри задачисем çинчен çырнă. Агитаторсем валли калаçу ирттерме Чăваш АССР перекет кассисемпе госкредит Управлени начальникĕ Я. Дубровский юлташ СССР Союзĕн государство заемĕсем çинчен çырнă статья пичетленнĕ.

Колхоз театрĕ Ульяновск облаçĕнче

Чăваш республикинчи куçса çӳрекен колхоз театрĕн коллективĕ Ульяновск облаçĕнчи Пухтел районĕнчи Тимĕрçен, Ирçен, Пухтел, Улхаш, Каша, Кундиков ялĕсенче Л. Агаковпа Л. Родионов çырнă «Ылтăн вăчăра», Г. Харлампьев çырнă «Чи илемли» тата Мари драматургĕ А. Волков çырнă «Ксения» ятлă пьесасене лартса пачĕ.

Спектакльсене колхозниксемпе колхозницăсем тата ялхуçалăх специалисчĕсем пысăк хаваслăхпа пăхаççĕ. Курма пыракансем театр коллективне ăшшăн тав тăваççĕ, малашне те час-часах килсе спектакльсем кăтартса пама сĕнеççĕ.

П. КАРТЮКОВ.

ПĔЛТЕРНИ

Паян, июнĕн 19-мĕшĕнче, каçхине 6 сехетре, хула Комитечĕн библиотека çуртĕнче агитаторсемпе докладчиксем валли «ССР Союзĕнчи государство заемĕсем» тема тăрăх доклад пулать.

Докладчик: Я. Е. Дубровский юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор заместителĕ М. Н. ЯКИМОВ.

Ыйтусемпе ответсем

ЫЙТУ. Атăлпа ытти юханшывсен сылтăм енĕ мĕншĕн çӳлĕрех, сулахай енĕ айлăмлă пулать?

Иванов А. И. Етĕрне районĕ, Тури Мучар ялĕ.

ОТВЕТ. Пирĕн патри юханшыв çурçĕрелле е кăнтăралла юхать пулсан, вĕсен сылтăм енĕ яланах çӳлĕрех пулни Çĕр хăй тĕнĕлĕ тавра çавăрăннинчен тата пур япаласем те куçнă чухнехи инерци законĕ текеннине пăхăннинчен килет.

Малтан глобус çинчи параллель текен линисене пăхса тухăпăр. Çак линисенчен чи вăрăмми экватор пулать. Экватортан икĕ полюс еннелле сывхарнă çемĕн параллельсем кĕскелсе пыраççĕ. Экватор çывăхĕнчи параллельсем экватортан кăшт çеç кĕскерех, полюссене çывăххисем питĕ кĕске. Глобуса çавăрсан, эпир экватор çинчи точка чи вăрăм çул тунине, параллель çинчи точкăсем кĕскерех çулсем туса куçнине сисме пултаратпăр.

Çĕр—пысăк шар, вăл хăй тĕнĕлĕ тавра çавăрăннă чухне экватор çинчи япаласем чи вăрăм çул тăваççĕ, экватор çывăхĕнчи параллель çинче вырнаçнă япаласен çулĕ кĕскерех пулать, экватортан аяккарах выртакан параллель çинче вырнаçнă япаласен çулĕ татах та кĕскелет, полюс çинчи япала пĕр вырăнтах юлать.

Çĕр çинчи параллельсен вăрăмăшне шутласа кăларма пулать, пĕр-пĕр параллель вăрăмăшне шутласа илсе ăна 24 çине пайласан, эпир çак параллель çинчи точка кашни сехетре хĕвелтухăç еннелле миçе километр куçнине пĕлетпĕр. Тупнă хисепе тата 60 çине пайласа, эпир çав параллель çинчи япала кашни минутра хĕвелтухăçнелле мĕн чухлĕ куçнине пĕлме пултаратпăр. Кирлĕ пулсан, çав параллель çинчи япала хĕвелтухăçне куçнă чухне секундра миçе метр тунине те пĕлме май килет.

Экватортан инçерех, полюс еннерех, параллельсем кĕскерех пулнипе вĕсем çинчи точкăн хĕвелтухăçнелле куçнă чухнехи хăвăртлăхĕ пĕчĕкленсе пырать. Сăмахран, экватор çинчи точка кашни секундра хĕвелтухăç еннелле 460 метра яхăн куçса пырать, 60 градуслă параллель çинчи точка секундра 230 метр çеç куçать, полюс çинчи точка çавăнтах юлать.

Экватор енчен полюссем еннелле юхса выртакан шывсене илĕпĕр. Вырăнтан хускалман шыв, хытă япаласем пекех, Çĕр çавăрăннă пирки хĕвелтухăç еннелле куçать, вăл хытă япаласенчен юлма та, иртсе кайма та пултараймасть, унăн хăвăртлăхĕ ытти типçĕр çинчи япаласен хăвăртлăхĕпе тан пулать. Экватор енчен полюс еннелле юхса выртакан шывăн Çĕр хăй тĕнĕлĕ тавра çавăрăннипе пулакан хăвăртлăхĕ таврари типçĕр хăвăртлăхĕнчен кăшт та пулсан ытларах пулать.

Çакна ăнланма эпир икĕ вырăн илĕпĕр, вĕсем иккĕшĕ те пĕр меридиан çинче пулччăр, пĕри экватор çывăхĕнче, тепри полюс еннерех. Пĕррремĕш вырăнти япаласем хĕвелтухăç еннелле кашни секундра 450 метрлă хăвăртлăхпа куçаççĕ, тейĕпĕр, иккĕмĕш вырăнти япаласем полюс еннерех пулнипе кĕскерех параллель çинче вырнаçаççĕ, вĕсен хăвăртлăхĕ пĕчĕкрех пулмалла, вĕсем хĕвелтухăçнелле кашни секундра 440 метр çеç куçаççĕ, тейĕпĕр. Пĕррремĕш вырăнти япалана сасартăках иккĕмĕш вырăна куçарсан, унăн хăвăртлăхĕ инерци законĕ текеннине пăхăнса малтанхи хăвăртлăх пекех секундра 450 метр юлмалла. Вăл иккĕмĕш вырăнти япаласенчен кашни секундрах вуншар метр ытларах хĕвелтухăçнелле куçса пымалла. Çавăнпа та экватор енчен полюссем еннелле юхакан шывсен хĕвелтухăç еннелле куçнă чухнехи хăвăртлăхĕ шывсем хĕррине вырăнтан хускалман япаласен хăвăртлăхĕнчен ытларах пулмалла. Юхакан шыв хĕвелтухăçнелле кăшт хăвăртрах куçнипе хăйĕн хĕвелтухăç енчи хĕррине тăрăнать. Экватор енчен çурçĕр е кăнтăр полюсĕсем еннелле юхакан шывсен хĕвелтухăç енчи хĕрри хуллен ишĕлсе пырать. Çĕр пĕр чарăнмасăр хăй тĕнĕлĕ тавра çавăрăнать, çавăнпа юханшывсен вăрăм ĕмĕрĕнче вĕсен хĕвелтухăçĕнчи хĕрри чылай ишĕлнĕ те тепĕр хĕрринчен чăнкăрах пулса пынă.

Экватор енчен çурçĕр полюсĕ еннелле пăхас пулсан, хĕвелтухăç сылтăмалла пулать, çавăнпа Çĕрĕн çурçĕр енчи полушарийĕнчи шывсен сылтăм хĕрри çӳлĕрех пулать. Экватортан кăнтăр полюсĕ еннелле пăхнă чухне хĕвелтухăç сулахайра пулать, çавăнпа кăнтăрти полушарире юхса выртакан юханшывсен сулахай хĕрри ишĕлсе пырать. Австралири, Кăнтăр Америкăри кăнтăр полюсĕ еннелле юхакан шывсен чăнах та сулахай хĕррисем чăнкăрах пулаççĕ.

Халĕ ĕнтĕ полюссем енчен экватор еннелле юхса пыракан шывсене илсе пăхăпăр. Полюс еннерех выртакан япаласем хĕвелтухăçнелле экватор еннерех выртакан япаласенчен пĕчĕкрех хăвăртлăхпа куçаççĕ, тенĕччĕ. Çавăнпа экватор еннелле юхакан шывсен Çĕр çавăрăннипе хĕвелтухăç еннелле куçнă чухнехи хăвăртлăхĕ хускалмасăр выртакан япаласен хăвăртлăхĕнчен каярах пулать. Хĕвелтухăç еннелле пĕчĕкрех хăвăртлăхпа куçнипе юханшыв хăйĕн хĕвеланăçри хĕррине капланать, тăрăнать. Вара экватор еннелле юхакан шывсен хĕвеланăç енчи хĕррисем хуллен ишĕлсе пыраççĕ. Çурçĕр полюс енчен экватор еннелле пăхсан, хĕвеланăç сылтăмалла пулать, çапла çурçĕр полушарире экватор еннелле юхакан шывсен сылтăм енĕ чăнкăрах пулмалла. Кăнтăрти полюсран экватор еннелле пăхсан хĕвеланăç сулахайра пулать, кăнтăрти полушарири юханшывсен сулахай хĕрри ишĕлсе пырать.

Пĕр-пĕр юханшыв хĕвелтухăçнелле е хĕвеланăç еннелле юхать пулсан, унăн хĕррисем иккĕшĕ те пĕр пекех пулмалла, анчах кун пек юханшывсем тĕл пулмаççĕ, вĕсем кукăр-макăр çул туса юхаççĕ, кăнтăралла е çурçĕрелле пăрăнаççĕ, çавăнпа вĕсен хĕррисем пĕр пек пулмаççĕ. Çурçĕр полушарире пур юханшывсен те сылтăм хĕрри, кăнтăр полушарири шывсен сулахай хĕрри хăшпĕр вырăнсенче çӳлĕрех пулать. Экватор çывăхĕнче хĕвелтухăçнелле е хĕвеланăçнелле юхакан шывсен хĕррисем пĕр-пĕринчен ытла уйрăм пулмаççĕ. Кун йышши шывсем Кăнтăр Америкăра—Амазонка, Африкăра — Конго. Вĕсен икĕ хĕрри хушшинче уйрăмлăх сукпа пĕрех.

Юлашкинчен хамăр республикăри условисенчи юханшывсене илсе пăхăпăр. Кĕçĕн Çавалăн çурçĕрелле юхса выртнă çĕрти шывĕ мĕнле куçнине пăхса тухăпăр. Вăл Çĕр çавăрăннă пирки хĕвелтухăç еннелле куçать, юхасса çурçĕрелле юхса пырать. Шывăн пĕр-пĕр пĕчĕк пайĕ çурçĕрелле 17 метр юхса кайсан, унăн хĕвелтухăçнелле куçнă чухнехи кашни секундри хăвăртлăхĕ хускалмасăр выртакан япаласен хăвăртлăхĕнчен пĕр миллиметр ытларах пулать. Тригонометрине пĕлекен юлташсем çакна часах тĕрĕслесе пăхма пултараççĕ. Çурçĕрелле 17 метр юхса кайнă шывăн хăвăртлăхĕ те унăн хĕрринчи тăпра хăвăртлăхĕнчен пĕр миллиметр ытларах пулмалла, вăл хĕвелтухăçнелле кашни секундрах пĕр миллиметр ытларах кайса пымалла. Анчах ăна хĕвелтухăç енчи хĕрри чарать, шыв хăйĕн хĕвелтухăç енчи хĕррине пĕчĕк вăйпа тăрăнать. Шыв хĕвелтухăç енне пĕчĕк вăйпа çеç тăрăннă пулин те темиçе çĕр пин çул иртиччен Çавалăн хĕвелтухăç енчи хĕррине чылай çĕмĕрнĕ. Çавал юххи еннелле пăхсан, унăн хĕвелтухăçĕнчи енĕ çав вăхăтрах сылтăм енĕ пулса тăрать.

Атăла юхса кĕрекен Ветлуга ятлă юханшыва илĕпĕр, вăл çурçĕртен кăнтăралла юхать. Унăн шывĕ 17 метр юхса ансан, çак шывăн хĕвелтухăç еннелле куçнă чухнехи секундри хăвăртлăхĕ çав тĕлти типçĕр хăвăртлăхĕнчен пĕр миллиметр каярах пулать. Шыв юнашар выртакан хускалман япаласенчен хĕвелтухăçнелле хуллен рех куçнипе хĕвеланăçри хĕррине тăрăнать те, Ветлугăн хĕвеланăç енчи хĕрри ишĕлсе пырать, вăл тепĕр хĕрринчен чăнкăрах пулать. Ветлугăн хĕвеланăç енчи хĕрри унăн сылтăм хĕрри пулать, мĕншĕн тесен Ветлуга юххи май пăхсан, хĕвеланăç пирĕншĕн сылтăмалла пулать.

Çапла вара Çавалăн та, Ветлугăн та сылтăм хĕррисем чăнкăрах пулаççĕ.

Çакна та астутарса хăвармалла. Çурçĕр полушаринчи юханшывсен сылтăм хĕрри çӳлĕрех пулни, кăнтăртисен сулахай хĕрри çӳлĕрех пулни Çĕр хăй тĕнĕлĕ тавра чăнах та çавăрăннине пĕлтерекен фактсенчен пĕри пулса тăрать.

Ф. КУЗЬМИН.

Кизел çĕр кăмрăк бассейнĕнчи драма театрĕн ГАСТРОЛĔСЕМ

Паян, июнĕн 19-мĕшĕнче, Чăваш академи театрĕнче Кизел çĕр кăмрăк бассейнĕнчи драма театрĕн гастролĕсем пуçланаççĕ.

Июнĕн 19-мĕшĕпе 20-мĕшĕнче — «Старик» (А. М. Горький çырнă тăватă пайлă драма).

Июнĕн 21-мĕшĕнче кăнтăрла «Королевство кривых зеркал» (виçĕ пайлă юмах. Авторĕсем Губарев тата Успенский).

Июнĕн 21-мĕшĕнче каçхине—«Шакалы» (Аугуст Якобсон çырнă тăватă пайлă драмăлла сатира).

Кăнтăрлахи спектакль 13 сехетре, каçхине 21 сехетре пуçланать.

Декораци килсе çитмен пирки, «Олеся» спектакль июнĕн 20-мĕшĕпе 21-мĕшĕнче пулмасть, ку спектакле июнĕн 27-мĕшĕпе 28-мĕшне куçарнă. Июнĕн 20-мĕшĕпе 21-мĕшĕ валли туяннă билетсемпе «Старик» тата «Шакалы» спектакльсем курма пулать. Туяннă билетсене июнĕн 27-мĕшĕпе 28-мĕшне хăварас текен юлташсен театр кассине июнĕн 19-мĕшĕнче пырса паллă тутармалла.

КИНО

«РОДИНА» — июнĕн 19-мĕшĕпе 20-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче илемлĕ фильм «Садко», 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче «Золушка» (çĕнĕ копи).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-04, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01422 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.